Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938
МАРТ
8
ЫТЛАРИКУН
54 (4867)-мĕш №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать ● ВКП(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйăн 6—23

СЫВĂ ПУЛТĂР ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ХĔРАРĂМСЕН КОММУНИСЛА КУНĔ!

Совет ĕçĕнчи хĕрарăмсен пултарулăхĕпе хастарлăхĕ ӳсет

Сталинла Конституци хĕрарăмсене пит те пысăк правасем панă. Пирĕн хĕрарăмсен арçынпа танах ĕçлеме, вĕренме, канма права пур. Совет государстви ачасен яслисем, ача çуратмали çуртсем туса, нумай çемйелисене укçа-тенкĕ парса, пурнăçпа пурлăхсене страхласа хĕрарăмсен пурнăçне лайăхлатса пырать. Пирĕн хĕрарăмсем халĕ телейлĕ, савăнăçлă пурăнаççĕ. Капиталисла çĕршывсенчи мĕлйуншар хĕрарăмсем ĕмĕр-ĕмĕр ĕмĕтленекен ĕмĕт пирĕн çĕршывра пурнăçа кĕчĕ. Аслă Ленин калани пĕтĕмпе пулса çитрĕ.

„Хĕрарăма пĕтĕмпех ирĕке кăларма, ăна арçынпа чăн-чăн тан тума обчăлă хуçалăх кирлĕ, пĕтĕм производствăлă ĕçре ĕçлеттерни кирлĕ. Çавăн чухне вара хĕрарăм арçын пекех вырăн йышăнĕ",— тенĕ Ленин. Пирĕн хĕрарăмсем промышленнăçра та, йалхуçалăхĕнче те арçынсемпе танах ĕçлеççĕ.

Колхоз стройĕ хĕрарăма арçынпа танах пулма мĕн кирлĕ условисене пурне те туса пачĕ. Аслă Сталин йулташ: „Хĕрарăм колхозра пысăк вăй пулса тăрать", тени халĕ пирĕн пурнăçра пит те аван курăнать. Социалисăм строительствинче квалификацилĕ ăста ĕçлекен работницăсен хисепĕ çулран çул ӳсет.

Капиталисăмла тĕнчере хĕрарăмсен пурнăçĕ тунсăх, мĕскĕн. Унта хĕрарăм—чура, пусмăрта пурăнать. Ăна обчествăлă пурнăçа хутшăнтармаççĕ, суйлавсенче сасă памаççĕ.

Пирĕн совет çĕршывĕнче хĕрарăмсем политикăла пурнăçа активлăн хутшăнаççĕ. ССР Сойузĕн Верховнăй Советне суйланă чухне Чăваш республикинчи мĕн пур хĕрарăмсенчен 97 процент суйлава хутшăнчĕç. Чăваш республикĕнчен Верховнăй Совет депутатне 5 хĕрарăм суйланă. Участкăри суйлав комиççисенче 1206, округри суйлав комиççисенче 31 хĕрарăм ĕçленĕ. Суйлав вăхăтĕнче хĕрарăмсем агитаторсем, доверенnăйсем пулса пин çын ытла ĕçленĕ.

Чăваш республикĕнче Советсенче хĕрарăмсем 17 пин çынна йахăн ĕçлеççĕ. Вĕсенчен: çекцисемпе депутат групписенче—14.519 хĕрарăм, йалсоветсемпе хула совет членĕсенче—5.231 хĕрарăм, райĕçтăвком членĕсенче—479 хĕрарăм, Чăваш АССР Тĕпĕçтăвком членĕсем хушшинче 35 хĕрарăм шутланать. 2 хĕрарăм райĕçтăвком председателĕнче ĕçлеççĕ.

Тăвай райĕçтăвком председателĕ—**Родионова** йулташ малтан 4 çул хушши йалсовет председателĕнче ĕçленĕ. Вăл унта хăйĕн пултарулăхне, вăйхăватне кăтартнă. Унăн йалсовечĕ Йетĕрне районĕнче лайăх хисепре тăнă.

Патăрйел райĕçтăвком председателĕнче ССР Сойузĕн Верховнăй Совет депутачĕ—**Харитонова** йулташ ĕçлет. Ăна ĕççыннисем йуратаççĕ. Вăл суйлавçăсем хушшинче пысăк хисепре. Харитонова йулташ патне ĕçпе, хăй суйланнă округа кĕрекен районсенчи çынсем çеç мар, Шăмăршă т. ыт. районсенчен те пыраççĕ. Харитонова райĕçтăвком председателĕнче ĕçленĕ вăхăтра та, малтанхи пекех, хăйĕн пултарулăхне, хăйĕн çирĕплĕхне тата хастарлăхне кăтартать.

Нумайах пулмасть, Чăваш республики столицин—Шупашкар хулин Советне председателĕ **Калинкина** йулташа суйласа лартрĕç. Вăл малтан вулама та, çырма та пĕлмен, тĕттĕм хĕрарăм пулнă—кĕтӳç пулнă. Вăл йăвăр пурнăçа тӳссе иртернĕ. Ăна Октйабĕр революцийĕ, Совет влаçĕ çавăн пек пысăк ĕçе хăпартрĕ.

Аслă Ленин калани—кашни кухаркă государствă ĕçне тума вĕренсе çиттĕр тени, пирĕн çĕршывра ĕнтĕ çакăн пек ăнăçлăн пурнăçа кĕрсе пырать.

Ĕлĕкхи саманара пуйансем патĕнче кухаркăра ĕçленĕ **Капустина** йулташ, халĕ Куславкка райĕçтăвкомĕнче халăх сывлăхне упрас тĕлĕшпе ĕçлекен пайĕн пуçлăхĕ. Йетĕрнере райфинпай пуçлăхĕнче **Кочергина** йулташ ĕçлет. Вăл хăйулă, пуçарулă, хастар хĕрарăм. Вăл малтан Стрелецки йалсовет председателĕ пулнă. Ку йалсовет районра пур ĕçсем тĕрĕх та малта пынă.

Хĕрарăмсене ответлă ĕçе кусарса пыни çинчен калакан тĕслĕхсем çаксем çеç мар. Пирĕн республикăра райĕçтăвком пайĕсенче тата çак йулташсем ĕçлеççĕ: **Коваљова** (Тутаркас р.), **Иванова** (Çĕмĕрле р.), Йалсовет председателĕсем пулса ĕçлекен хĕрарăмсем пурĕ 25 çын. Вĕсенчен хăшпĕрисем, сăмахран, **Данилова** (Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Кутемер йалсовет председателĕ ЧАССР Тĕпĕçтăвком членĕ), **Андрйева** (Йĕпреç р.). комсомолка **Љвова** (Канаш р.), **Шчипцовапа Смирнова** (Йелчĕк р.) йулташсем советсен суйлавĕ пулса иртнĕренпе—1934 çултанпа ĕçлеççĕ. Вĕсем хисеплĕ шутра тăраççĕ. Патăрйел районĕнчи Çĕнĕ Ахпӳрт йалсовет председателне—Тĕпçтăвком членне **Каштанова** йулташа та ĕççыннисем аван пĕлеççĕ.

Чăваш халăхĕн чи лайăх хĕрĕсене ССР Сойузĕн Верховнăй Совет депутатне суйланă. Сăмахран, акă **Цыганова** йулташа илер. Вăл Куславкка комбинатĕнчи паллă стахановкă. Вăл пур ĕçе те пĕтĕм вăйран хутшăнать.

Йулашки 6—7 уйăх хушшинче совет ĕçне 50 хĕрарăм ытла лартнă. Кунсăр пуçне хуçалăх организацисенче тата кооперацине колхозсенче ответлă ĕçсене çĕршер хĕрарăм уйăрса лартнă. Вĕсем ĕçлеме пултараççĕ, мĕншĕн тесен, вĕсене Ленин—Сталин партийĕ çитĕнтерсе ӳстернĕ.

Хĕрарăмсене йертсе пырас ĕçе хăйулăнтарах лартас пулать, совет активне анлăн çитĕнтерес пулать, ĕçе çĕнĕрен лартнă хĕрарăмсене куллен пулăшса пырас пулать—çакăн пек ĕнтĕ пирĕн умра Пĕтĕм Тĕнчери Хĕрарăмсен кунĕ—мартăн 8-мĕшĕ лартакан задачă.

Совет ĕçĕнче ответлă ĕçсенче ĕçлекен хĕрарăмсем, халăхăн телейĕшĕн хытăрах кĕрешĕр, халăхпа тачăрах çыхăнăр. Çитес суйлавра—РСФС Республикĕн тата Чăваш республикĕн Верховнăй Совечĕсене суйланă чухне, пирĕн чăваш хĕрарăмĕсем халăхăн чи лайăх, шанчăклă ывăл-хĕрĕсемшĕн сасăлĕç.

Сывă пултăр хĕрарăмсене телейлĕ те савăнăçлă пурнăç туса паракан Ленин—Сталин партийĕ!

З. Андрейева.

Колхозри телейлĕ пурнăç

Колхозлă пурнăç, пĕрлешӳлĕ ĕç—пирĕн совет хĕрарăмĕсене чăнчăн пĕртанлăх пачĕ. Пирĕн колхозницăсем—колхозра арçынсемпе пĕр танах ĕçлеççĕ, тупăшне те пĕр танах илеççĕ. Вĕсем политикăлă пурăнăçа та активлă хутшăнаççĕ.

Епĕр кунта Куракăшри (Елĕк р-нĕ) паллă колхозницăсем çинчен тĕслĕхсем илсе каласа парасшăн.

Акă, пирĕн умра Ољгă Антонăва. Ољгă виçĕ çул хушши ĕнтĕ колхозăн сĕт-çуферминче ĕçлет. Иртнĕ çулта вăл хăйех 700 ĕçкунĕ тунă. Вĕсен çемйи (виççĕн пурăнаççĕ) 450 пăт тĕштырă илнĕ. Фермăра тăрăшса ĕçленĕшĕн, ĕнесене йуратса пăхнăшăн Ољгăна темиçе хут та преми панă.

Акă тата, трактористка Степанида Рыбакова. Унăн çемйи пиллĕкĕн пурăнать: вăл хăй, виçĕ ачи тата ватă амăшĕ. Ĕç çинчен сăмах пуçлансан Степанида:

—Епĕ малашне тата лайăхрах ĕçлеме тăрăшатăп. Ĕçре пĕр арçынтан та кайа йулмастăп, тет.

Иртнĕ çулта Степанидă, ытти тупăшсене шутламасан та, тĕштырă 200 пăт илчĕ. Халь вăл комбайнерсен курсĕнчен вĕренсе тухрĕ.

Парти кандидачĕ Йевдокийа Шљабина йулташ иртнĕ çулта трактор бригадин бригадирĕ пулса ĕçлерĕ. Лайăх ĕçленĕшĕн ăна темиçе хут та преми панă. Хальхи вăхăтра Иевдокийа йалхуçалăхĕн коммунисла аслă шкулĕнче вĕренет.

Çапла ĕçлеççĕ, çапла пурăнаççĕ пирĕн колхозницăсем.

Г. Иљбаторкин.
И. Воробйов.

Хамăр тунă çитĕнӳсене пăхса тухатпăр

Пайан Пĕтĕм Совет Сойузĕнчи работницăсем, колхозницăсем, служăщчи-хĕрарăмсем Ĕçхĕрарăмĕсен Пĕтĕм Тĕнчери Коммунисла кунне—мартăн 8-мĕшне уйавласа иртереççĕ.

Епĕр Куславкка комбинатĕнчи ĕçхĕрарăмĕсем çак уйава пысăк хаваслăхпа ирттеретпĕр.

Ирĕклĕ те хаваслă пурăнаççĕ пирĕн работницăсемпе колхозницăсем. Халĕ ĕнтĕ ĕлĕкхи асаплăх пирĕн çинчен ĕмĕрлĕхе сирĕлчĕ. Коммуниссен партипе совет влаçĕ хĕрарăмсене ĕлĕкхи пусмăртан хăтарса, социалисăмла строителствăра арçынсемпе пĕр ĕрете тăратрĕç. Халĕ пирĕн пиншер хĕрарăмсем халăх хуçалăхĕн пур отрăслисенче те ответлă вырăнсенче ĕçлеççĕ, пиншер хĕрарăмсем çĕнĕ техникăна, наукăпа искусствăн çӳлĕ пусăмĕсене алла çавăрса илчĕç. Çакна, пирĕн Куславкка комбинатне илсен те, лайăх курма пулать.

Куславкка комбиначĕ ĕçлеме тытăнни кăçалхипе 8-мĕш çул пулать. Çак 8 çул хушшинче пирĕн комбинатра нумай хĕрарăмсем ӳссе çитĕнчĕç. Ĕлĕк хутла пĕлмен, техникă çинчен ăнланман хĕрарăмсем халĕ ответлă ĕçсенче, пысăк станоксем патĕнче ĕçлеççĕ.

Акă сăмахран, Сымокина йулташа илер. Вăл комбината 1930 çулта пынă. Ун чухне вăл хутла пĕлмен, станоксене куçпа та курман. Халĕ вăл комбинатри кирек мĕнле станок çинче те ĕçлеме пултарать.

Комсомолкă Мошкова йулташа илер. Комбината пынă чухне вăл питĕ сахал пĕлетчĕ. Комбинатра ӳссе, активлă обшчественицă пулса тăчĕ. Халĕ вăл комсомол Обкомĕн членĕ.

Мйасникова йулташ 5 çул кайарах техникă çинчен ăнланман та. Халĕ вăл комбинатри паллă стахановкă.

Манăн цехра ĕçлекенсенчен çурри ытла хĕрарăмсем. Вĕсем пĕри те арçынсенчен кайа йулмаççĕ, ĕçре çитĕнсе пыраççĕ. Краснова Варвара 5 çул кайарах хутла та пĕлмесчĕ. Халĕ çырма та, вулама та вĕренсе çитрĕ. Вăл халĕ те шкула активлăн çӳрет. Нумайах та пулмасть, ăна сочувствуйушчине илчĕç.

Комсомолка Морскова Йекатеринă завкомра активлă ĕçлет, халĕ ăна агитаторсен курсне вĕренме йачĕç.

Çакăн пекех тата ытти вуншар работницăсене те кăтартса пама пулать.

Пирĕн комбинатра килхуçи хĕрарăмсем те обшчествăлă ĕçсене активлăн хутшăнаççĕ.

Епĕ çак кунсенче хамăр работницăсемпе килхуçи хĕрарăмсене Чăваш Тĕпĕçтăвкомĕн IX-мĕш Çесçийĕн решенийĕсем çинчен тата йалхуçалăх стахановцисен республикăри сљочĕ çинчен каласа кăтартатăп. Мартăн 8-мĕшĕнче партипе совет влаçĕ пулăшнипе епĕр хамăр тунă çитĕнӳсене пăхса тухатпăр.

Совет влаçĕ пире ырă пурнăç пачĕ. Епĕр халĕ ирĕклĕ те пуйан колхозлă пурнăçра пурăнатпăр.

Халăхăн тискер тăшманĕсем—троцкиссем, бухаринцăсем, рыковцăсем пирĕн телейлĕ пурнăçа туртса илме, пирĕн социалисăмла çĕршывра капиталиссемпе помешчиксен влаçне туса хума хăтланчĕç. Анчах вĕсен ĕçĕнчен нимĕн те тухмарĕ. Пирĕн Шалти Ĕçсен Халăх Комиссариачĕн органĕсем халăх тăшманĕсен ирсĕр ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларчĕç. Епĕр тăшмансене çĕмĕрсе тăкрăмăр, малашне те пĕр хĕрхенӳсĕр кăкласа пырăпăр.

Мартăн 8-мĕш кунĕнче епĕр, хамăр коммуниссен партине, йуратнă çулпуçа Сталин йулташа вĕçĕмсĕр йуратнине, вăл йертсе пынипе тата чаплă çĕнтерӳсем патне пыма пултарнине кăтартса парар!

ССР Сойуз Верховнăй Совечĕн депутачĕ **Й. Цыганова.**

Хĕрарăм йертсе пыракан колхозра

Çĕрпӳ районĕнчи „Вучах" колхоза тăваттăмĕш çул ĕнтĕ Андрейева йулташ йертсе пырать. Вăл колхоз председателĕнче ĕçлеме пуçланăранпа колхоз кашни çулех вăйларан та вăйлă тырпул туса илет. Колхоз районта малти колхозсенчен пĕри шутланса тăрать.

—Патша саманинче хĕрарăма хуçалăхпа йертсе пыма шанман, ун çинчен ĕмĕтленме те пултарайман. Совет влаçĕ çеç хĕрарăма арçынпа пĕртан права пачĕ, ӳсме пулăшрĕ. Халĕ хĕрарăм та пысăк хуçалăха йертсе пыма пултарать.

Епĕ иртнĕ çулта Шупашкарта колхоз председателĕсен шкулĕнчен вĕренсе тухрăм. Шкулта пулни пысăк тухăçлă тырпул туса илме нумай пулăшрĕ.

Епĕр, суртлă вăрлăх акман пулсан та гектартан 30 центнер урпа туса илтĕмĕр. Суртлă вăрлăх пулнă пулсан, урпа тухăçĕ татах та пысăк пулмалаччĕ. Уйрăм участкăсем çинче гектартан 47 центнер таран тĕштырă туса илтĕмĕр. Сĕлĕ, уйрăм участкăсем çинчен 37 центнер илтĕмĕр. Вăтам шутпа гектартан 26-шар центнер тĕштырă туса илтĕмĕр.

Епĕр, иртнĕ çулта Мари республикипе ăмăрту договорĕ туса, вăтамран кашни гектартан 20 центнертан кайа мар тĕштырă, 8 центнер кантăр сӳсĕ туса илме обйазателствă илнĕччĕ. Мари республикинчен килнĕ делегатсем ун чухне тĕлĕнсе „мĕнле майпа-ха есĕр 8 центнер туса илме пулатăр".?— терĕç. Епĕр вăтамран 8 центнер мар, 12 центнер кантăр сӳсĕ туса илтĕмĕр. Уйрăм участкăсем çинчен 14-шар центнер те илтĕмĕр.

„Вучах" колхозри колхозниксен чылайăшĕн ĕне тата сурăхсем пулман, çимĕ çителĕклĕ тырă пулман. Халĕ ĕнесĕр, сурăхсăр пурăнакан пĕр хуçалăх та çук. Колхозниксем пуйан та кулђтурăлă пурнăçпа пурăнакан пулчĕç,—тет Андрейева йулташ.

Çичĕ çул коњухра ĕçлет

Афанасйева Агафийă колхоза кĕриччен начар пурнăçпа пурăнатчĕ. Упăшки вилнĕ хыççăн, 5 ачапа тăлăха тăрса йулчĕ. Çити-çитми пурнăçпа нумай асапланса пурăннă вăл. Колхоза кĕрсен вăл хăйĕн телейне тупрĕ.

Халĕ Агафи кулђтурăлă та пуйан пурнăçпа пурăнать.

Вăл 1931 çултанпа пĕр улшăнмасăр коњухра ĕçлет. Лашасене лайăх пăхать, вăл пăхакан лашасем йаланах мăнтăр.

Лайăх ĕçлесе пынăшăн ăна темиçе хут та преми панă. Халĕ вăл хăй пăхакач 7 лашана çуракине мăнтăр кăларассишĕн тăрăшса ĕçлет. Ытти коњухсем те ун примĕрĕпе ĕçлесе пыраççĕ.

Агафи хăйĕн ачисемпе колхсзра савăнса ĕçлесе пурăнать. Аслă ывăлĕ—Николай ирĕклĕ пожар дружинĕн охраникĕ, иккĕмĕш ывăлĕ—Дмитрий колхозри стахановла бригадăн бригадирĕ; унăн ачисем те, хăй пекех, колхозри стахановецсем.

— Пурнăç лайăх,—тет Агафийă Афанасйева,—пире çак лайăх пурнăçа туса панăшăн совет влаçне, аслă Сталина тав тăватăп.

Могонин.

Çитĕнӳсемпе кĕтсе илеççĕ

Çĕмĕрле комбинатĕнче стахановкăсемпе ударницăсем пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунне производствăра çĕнĕ ӳсĕмсем тунипе кĕтсе илеççĕ. Ăмăртса ĕçлекенсен шучĕ уссех пырать. Авса пукансем тăвакан цехри глјанцировкă отделенинчи стахановкăсем пурте ăмăртса ĕçлеççĕ. Чапрайева, Серебрйакова т. ы. ыт. йулташсем кашни кунхи нормăсене 150 процент таран тултарса пыраççĕ. Хĕрарăмсем хушшинче ĕçлессипе Анна Чапрайева тăрăшса ĕçлет. Вăл цехра депутат группине йертсе пырать. Хальхи вăхăтра работницăсем РСФСР Верховнăй Советне тата ЧАССР Верховнăй Советне суйламали положенине вĕренеççĕ.



„Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали Положенине“ çирĕплетесси çинчен

Чăваш АССР X-мĕш созыври Ĕçтăвакан Тĕп Комитетăн IX-мĕш çеççийĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ çапла йышăнат:

„Чăваш Автономлă Социалисăмла Совет Республикĕн Верховнăй Советне суйламали Положенине“ çирĕплетес.

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председателĕ **З. АНДРЕЙЕВА.**

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет секретарĕ **Т. ВАСИЛЙЕВ.**

Шупашкар хули,
1938 çулти мартăн 6-мĕш.

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали ПОЛОЖЕНИ

I-мĕш сыпăк

Суйлав системи

1 статйа. Чăваш АССР Конституцийĕн 101 статйи тăрăх, Чăваш АССР Верховнăй Советне депутатсене суйлавçăсем пурне те тивĕç, пĕртан тата тÿрех суйламала правапа вăрттăн сасăласа суйлаççĕ.

2 статйа. Чăваш АССР Конституцийĕн 102 статйи тăрăх, депутатсен суйлавĕ пурне те тивĕçлĕ: Чăваш АСС Республикĕн 18 çул тултарнă пур граждăнсен те, мĕнле расăпа националĵнăç пулнине, мĕнле тĕн тытнине, мĕн чухлĕ вĕреннине, пĕр вырăнта пурăннипе пурăнманнине, мĕнле социаллă сийрен тухнине, пурлăхĕ мĕнлине тата ĕлĕк мĕн ĕçпе пурăннине пăхмасăр,—ăсран тухнисемсĕр тата судпа айăпласа суйлав прависĕр хăварнă çынсемсĕр пуçне,—пурин те депутатсен суйлавне хутшăнма та, Чăваш АССР Верховнăй Советне суйланма та права пур.

3 статйа. Чăваш АССР Конституцийĕн 103 статйи тăрăх, депутатсен суйлавĕ пĕртан: кашни граждăнин пĕр сасă пур; суйлавсенче пур граждăнсем те пĕртан тивĕçпе пулаççĕ.

4 статйа. Чăваш АССР Конституцийĕн 104 статйи тăрăх, хĕрарăмсем суйлас тата суйланас правапа арçынсемпе пĕртан усă кураççĕ.

5 статйа. Чăваш АССР Конституцийĕн 105 статйи тăрăх, Хĕрлĕ Çар ретĕнче тăракан граждăнсем суйлас тата суйланас правапа мĕн пур граждăнсемпе пĕртан усă кураççĕ.

6 статйа. Чăваш АССР Констиуцийĕн 106 статйи тăрăх, суйлав чухне кандидатсене суйлав округĕсем тăрăх тăратаççĕ.

II-мĕш сыпăк

Суйлавçăсен спискисем

7 статйа. Суйлавçăсен спискине хуласенче—ĕççынни депутачĕсен хула Совечĕсем, йалсенче—ĕççынни депутачĕсен йал Совечĕсем тăваççĕ.

8 статйа. Суйлавçăсен спискисене пур граждăнсене те,—суйлав прави пуррисене, спискăсене тунă вăхăта çав Совет территорийĕнче (йалан йе вăхăтлăха) пурăнакансене, суйлав кунĕ тĕлне 18 çула çитнисене кĕртеççĕ.

9 статйа. Суйлавçăсен спискисене суд приговорĕсем тăрăх суйлав прависĕр хăварнă çынсене, суд приговорĕнче суйлав прависĕр хăварма кăтартнă пĕтĕм срук хушшинче, çавăн пекех тата саккун кăтартнă йĕрке тăрăх ăсран тухнă тесе шутланă çынсене кĕртмеççĕ.

10 статйа. Суйлавçăсен спискисене кашни суйлав участки тăрăх алфавит йĕркипе, суйлавçăн хушаматне, йатне, ашшĕ йатне, миçе çултине тата ăçта пурăннине кăтартса тăваççĕ те, ĕççынни депутачĕсен Совечĕн председателĕпе секретарĕ алă пусаççĕ.

11 статйа. Суйлавçăсене нихăшне те пĕр суйлав спискине кĕртиничен пуçне урăх спискăна кĕртме йурамасть.

12 статйа. Çар чаçĕсенче тата çар пĕрлешĕвĕсенче тăракан суйлавçăсен спискисене командовани тăват, вĕсене командирпа çар комиссарĕ алă пусаççĕ. Çарта ĕçлекен ытти мĕн пур çынсене суйлавçăсен спискисене вĕсем пурăнакан вырăнсенче ĕççынни депутачĕсен Совечĕсем кĕртеççĕ.

13 статйа. Бођницасемпе ача çуратмали çуртсем, санаторисем тата ытти сыватакан учрежденисем çумĕнче тăвакан суйлав участкисенчи суйлавçăсен спискине чирлĕ граждăнсене те тата суйлав кунĕнче дежурствăра пулакан медицинă персоналне те кĕртеççĕ.

Скарлатинă тата дифтери отделенисенче выртакан чирлĕ çынсем суйлава хутшăнма пултараймаççĕ.

14 статйа. Суйлав умĕн 30 кун малтан ĕççынни депутачĕсен Совечĕ суйлавçăсен спискисене пурте пăхса тухма кăларса çакат йе çав спискăсемпе Совет çуртĕнче паллашма суйлавçăсене май туса парат.

15 статйа. Суйлавçăсен тĕп спискисем ĕççынни депутачĕсен тивĕçлĕ Советĕнче тата çар чаçĕсенче йе çар пĕрлешĕвĕсенче упранса тăраççĕ.

16 статйа. Суйлавçăсен спискине çырса пĕлтернĕ вăхăтра суйлав кунĕ хушшинче суйлавçă урăх вырăна куçсан, кивĕ вырăнти ĕççынни депутачĕсен тивĕçлĕ Совечĕ ăна, Тĕп суйлав комиççийĕ йышăннă формăпа, „сасăлама права паракан удостоверени“ парат те суйлавçăсен спискинче—„туха кайнă“ тесе паллă тăват; йаланлăха йе вăхăтлăха пурăнма куçнă çĕнĕ вырăнта суйлавçа, хăй камне пĕлтерекен удостоверени, çавăн пекех тата „сасăлама права паракан удостоверени“ кăтартсан, суйлавçăсен спискине кĕртеççĕ.

17 статйа. Суйлавçăсен спискинче тĕрĕсмарлăх пурри çинчен (спискăсене кĕртменни, спискăсенчен кăларни, хушамата, йата, ашшĕ йатне пăсса çырни, суйлав прависĕр хăварнă çынсене спискăна тĕрĕс мар кĕртни çинчен) зайавленийе спискăсене çырса пĕлтернĕ ĕççынни депутачĕсен Советне памала.

18 статйа. Ĕççынни депутачĕсен Совечĕн ĕçтăвакан комитечĕ суйлавçăсен спискинчи тĕрĕсмарлăхсем çинчен панă кашни зайавленийе виçĕ кун хушшинче пăхса тухма тивĕç.

19 статйа. Суйлавçăсен спискинчи тĕрĕсмарлăхсем çинчен панă зайавленийе пăхса тухнă хыççăн, ĕççынни депутачĕсен Совечĕн ĕçтăвакан комитечĕ суйлавçăсен спискине йе кирлĕ тÿрлетÿсем кĕртме, йе зайавлени паракана унăн зайавленине мĕн сăлтавпа йышăнманни çинчен çырнă справкă пама тивĕç; ĕççынни депутачĕсен Совечĕн решенийĕпе килĕшмесен, зайавлени паракан çын халăх судне жалăбă пама пултарат.

20 статйа. Халăх сучĕ виçĕ кун хушшинче, судăн уçă ларăвĕнче, зайавлени паракана тата Совет представителне чĕнсе, спискăри тĕрĕсмарлăх çинчен панă жалăбăна пăхса тухма тивĕç, хăйĕн решенине çийĕнчех зайавлени паракана та, çаплах тата Совета та пĕлтерме тивĕç. Халăх сучĕн решенийĕ татăклă.

III-мĕш сыпăк

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали суйлав округĕсем

21 статйа. Чăваш АССР Конституцийĕн 22 статйи тăрăх, Чăваш АССР Верховнăй Советне Чăваш АССР граждăнĕсем суйлав округĕсем тăрăх суйлаççĕ.

22 статйа. Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали округ çак принциппа пулат: округ пуçне—12.000 çын. Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали кашни суйлав округĕ пĕр депутат йарат.

23 статйа. Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали суйлав округĕсене уйăрассине Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ тăват.

24 статйа. Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали суйлав округĕсен спискине Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ суйлавсен кунне палăртса хунипе пĕр вăхăтра пичетлесе пĕлтерет.

IV-мĕш сыпăк

Суйлав участкисем

25 статйа. Суйлав бÿллетенĕсене илсе тăма тата сасăсене шутласа тухма Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали суйлав округĕсене кĕрекен хуласемпе районсем территорийĕ суйлав участкисене пайланат.

26 статйа. Суйлав участкисене хуласенче—ĕççынни депутачĕсен хула Совечĕсем, йалти вырăнсенче—ĕççынни депутачĕсен район Совечĕсем тăваççĕ.

27 статйа. Суйлав участкисене уйăрассине суйлавччен 45 кунран кайа йулмасăр малтан тăваççĕ.

28 статйа. Йалсовет территорийĕ, унта пурнакансем икĕ пин çынран ытла мар пулсан, йалан пекех, пĕр суйлав участки пулса тăрат; кашни поçолкăра, салара, йалта, унта пурнакансем 500 çынран пуçласа 2000 çынран ытла мар пулсан—уйрăм суйлав участки организацилеççĕ.

Халăх хисепĕ 500 çынран сахалрах, анчах 300 çынран сахал мар йалсенче йе йалсен ушкăнĕнче, çавăн пек йалсем суйлав участки центăрĕнчен 10 километр ытла инçетре пулсан, уйрăм суйлав участкисем тума йурат.

29 статйа. Уйрăм вырăнсенче, вак йалсем ытларах çĕрте, Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ йышăннипе, суйлав участкисене халăх хисепĕ 100 çынран сахал мар пулсан, организацилеме йурат.

30 статйа. Хуласем, рабочи поçолкисем, çавăн пекех йалсем тата йалсовет территорийĕ, унта пурнакансем 2.000 ытла шутланаççĕ пулсан, суйлав участкисене пайлапаççĕ, пĕр суйлав участкинче пурнакансен хисепĕ 1.500—2.500 çын пулмала.

31 статйа. Çар чаçĕсем тата çар пĕрлешĕвĕсем, вĕсенче суйлавçăсем 50-ран сахал мар тата 1500 суйлавçăран ытла мар хисеппе уйрăм суйлав участкисем пулса тăраççĕ, вĕсем чаçсем йе çар пĕрлешĕвĕсем тăракан вырăнсенчи суйлав округне кĕреççĕ.

32 статйа. Боđницасенче, ача çуратмали çуртсенче, санаторисенче, инвалидсен çуртĕсенче суйлавçăсен хисепĕ 50-ран кайа мар пулсан, уйрăм суйлав участкисем тăваççĕ.

Темиçе корпуслă боđницасенче уйрăм корпус çумĕнче, вĕсенче кашнинче 50 суйлавçăран сахал мар пулсан, суйлав участкисем тума йурат.

Уйрăм суйлав участкисем туман боđницасемпе сыватакан ытти учрежденисенче суйлав бÿллетенĕсене суйлав комиççисен уйăрнă членĕсем илме пултараççĕ. Ун пек чухне боđницасене уйрăм суйлав йешчĕкĕсем параççĕ.

V-мĕш сыпăк

Суйлав комиççийĕсем

33 статйа. Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Тĕп суйлав комиççине общĕствăлă организацисен тата ĕççынни общĕствисен представителĕсенчен тăваççĕ, ăна Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ суйлавсен кунĕ çинчен пичетлесе пĕлтернипе пĕр вăхăтра çирĕплетет.

34 статйа. Тĕп суйлав комиççине çаксенчен тăваççĕ: председатĕл, председатĕлĕн заместителĕ, секретар тата 8 член.

35 статйа. Тĕп суйлав комиççийĕ:

а) Чăваш АССР пĕтĕм территорийĕнче суйлавсем пынă хушăра „Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали Положенийе“ ĕçе тĕрĕс кĕртсе пынине сăнаса тăрат;

б) суйлав комиççийĕсем тĕрĕс мар тунисем çинчен панă жалăбăсене пăхса тухат тата жалăбăсем тăрăх татăклă решени йышăнат;

в) пичетсен, суйлав йешчĕкĕсен образецĕсене, „сасăлама права паракан удостоверени“ формине, суйлав бÿллетенĕсен тата вĕсене вађђи конвертсен формипе тĕсне, суйлавçăсен списки формине, сасăсене шутласа тухмали протоколăн формине, суйланни çинчен паракан удостоверени формине туса парат;

г) Чăваш АССР Верховнăй Советне суйланă депутатсене регистрацилет;

д) Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Мандат Комиççине суйлавсен делопроизводствине парат.

36 статйа. Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали кашни суйлав округĕнче Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округри суйлав комиççине тăваççĕ.

37 статйа. Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округсенчи суйлав комиççийĕсене общĕствăлă организацисен тата ĕççынни общĕствисен представителĕсенчен тăваççĕ, вĕсене Чăваш АССР Верховнăй Совет президиумĕ суйлавччен 55 кунран кайа йулмасăр малтан çирĕплетет.

38 статйа. Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Округри суйлав комиççине çаксенчен тăваççĕ: председатĕл, председатĕлĕн заместителĕ, секретар тата 6 член.

39 статйа. Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Округри суйлав комиççийĕ:

а) ĕççынни депутачĕсен Совечĕсен ĕçтăвакан комитечĕсем суйлав участкисене вăхăтра организациленине сăнаса тăрат;

б) суйлав участкисен йĕрке помĕçĕсене кăтартса хурат;

в) суйлавçăсен спискисене вăхăтра тунине тата вĕсем çинчен пурне те пĕлтернине сăнаса тăрат;

г) Чăваш АССР Конституцийĕ тата „Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали Положени“ хушнисене пăхăнса, Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлама тăратнă кандидатсене регистрацилет;

д) участкăри суйлав комиççийĕсене йышăннă формăлă суйлав бÿллетенĕсем тата конвертсем парса тăрат;

е) сасăсене шутласа тухат тата округ тăрăх суйлав резуђтачĕсене палăртса хурат;

ж) Тĕп суйлав комиççине суйлавсен делопроизводствине тăратат;

з) суйланнă депутата суйлани çинчен удостоверени парат.

40 статйа. Участкăри суйлав комиççине общĕствăлă организацисен тата ĕççынни общĕствисен представителĕсенчен тăваççĕ, вĕсене хуласенче—ĕççынни депутачĕсен хула Совечĕсем, йалти вырăнсенче—ĕççынни депутачĕсен районри Совечĕсем суйлавччен малтан 40 кунран кайа йулмасăр çирĕплетеççĕ.

41 статйа. Участкăри суйлав комиççине çаксенчен тăваççĕ: председатĕл, председатĕл заместителĕ, секретар тата 2—6 член.

42 статйа. Участкăри суйлав комиççийĕ:

а) суйлав участки тăрăх суйлав бÿллетенĕсене илсе тăрат;

б) Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă кашни кандидатшăн панă сасăсене шутласа тухат;

в) суйлавсен делопроизводствине Округри суйлав комиççине парат.

43 статйа. Тĕп суйлав комиççине округсенчи тата участкăсенчи суйлав комиççийĕсен ларăвĕсем, вĕсенче пĕтĕм комиççи составĕн çурри ытла пулсан, тĕрĕс шутланаççĕ.

44 статйа. Суйлав комиççийĕсенче пур ыйтусене те сасăсен ахађ ытларахăшĕпе татса параççĕ; сасăсем пĕр тан пулсан, председатĕл сасси ытларах тай парат.

45 статйа. Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас ĕçри расхутсем государствă шутĕнчен пулаççĕ.

46 статйа. Тĕп Суйлав Комиççийĕн Округсенчи тата участкăсенчи суйлав комиççийĕсен Тĕп суйлав комиççийĕ çирĕплетнĕ образецлă пичет пур.

VI мĕш сыпăк

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутатне суйлама кандидатсем тăратас йĕрке

47 статйа. Чăваш АССР Верховнăй Советне кандидатсем тăратас права—Чăваш АССР Конституцийĕн 109 статйи тăрăх—общĕствăлă организацисемпе ĕççынни общĕствисене: коммунисла партилĕ организацисене, профеççилĕ союзсене, кооперативсене, çамрăксен организацийĕсене, куђтурăлă общĕствăсене тата саккун йĕркипе регистрациленĕ ытти организацисене тивĕçлĕ.

48 статйа. Кандидатсем тăратас права общĕствăлă организацисен тата ĕççынни общĕствисен республикăри оргăнĕсем те, вĕсен районсенчи оргăнĕсем те, çавăн пекех предприйатисенче—рабочисемпе служăщисен, çар чаçĕсенче—красноармейцăсен пĕрлехи пухăвĕсем, çавăн пекех тата колхозсенче—хресченсен, совхозсенче—совхоз рабочийĕсемпе служăщисен пĕрлехи пухăвĕсем пурнăçа кĕртеççĕ.

49 статйа. Депутата суйлама тăратнă кандидатсем Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Округри суйлав комиççисен, çавăн пекех тата вĕсене депутата суйлама кандидата тăратнă округри Участкă суйлав комиççисен членĕнче тăма пултараймаççĕ.

50 статйа. Суйлавччен 30 кун малтан, Чăваш АССР Республикĕн Верховнăй Советне депутатсем суйлама кандидатсем тăратакан пур общĕствăлă организацисем йе ĕççынни общĕствисем депутата суйлама тăратнă кандидатсене Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен тивĕçлĕ Округри суйлав комиççийĕнче регистрацилемеле.

51 статйа. Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Округри суйлав комиççийĕсем общĕствăлă организацисемпе ĕççынни общĕствисем Чăваш АССР Конституцийĕ тата „Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали Положени“ хушнисене пăхăнса тăратнă кандидатсене пурне те регистрацилеме тивĕç.

52 статйа. Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидатсем тăратакан общĕствăлă организаци йе ĕççынни общĕстви Округри суйлав комиççине çак документсене тăратма тивĕç:

а) депутата суйлама кандидат тăратнă пуху йе лару президиум членĕсем алă пуснă, вĕсем миçе çултине, ăçта пурăннине, кандидат тăратнă организаци йатне, депутата суйлама кандидат тăратнă пуху йе лару ăçта, хăш вăхăтра, унта миçе çын пулнине кăтартса, çырнă протокола, çавăнпа пĕрлех протоколра депутата суйлама тăратнă кандидатăн хушаматне, йатне, ашшĕ йатне, вăл миçе çултине, ăçта пурăннине, партире тăнипе тăманнине, мĕн ĕçпе пурăннине кăтартса çырмала;

б) депутата суйлама тăратнă кандидат вăл çав суйлав округĕнче хăйне тăратнă организацирен баллотировкăна тăма килĕшни çинчен зайавлени.

53 статйа. Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă кандидат пĕр округра кăна сасăланма пултарат.

54 статйа. Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Округри суйлав комиççийĕ депутата суйлама тăратнă кандидата регистрацилеме йышăнманни çинчен икĕ кунлă срукра Тĕп суйлав комиççине жалăбă пама пулат, Тĕп Суйлав Комиççийĕн решенийĕ татăклă пулса тăрат.

55 статйа. Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама регистрациленĕ кашни кандидатăн хушаматне, йатне, ашшĕ йатне, миçе çултине, мĕнле ĕçпе пурăннине, партире тăнипе тăманнине, тата кандидат тăратнă организаци йатне Округри суйлав комиççийĕ суйлавччен 25 кун малтан пичетлесе пĕлтерет.

56 статйа. Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама регистрациленĕ пур кандидатсене те суйлав бÿллетенне обйазательнă кĕртмеле.

57 статйа. Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Округри суйлав комиççисен Чăваш АССР Верховнăй Советне суйличчен 15 кун малтан суйлав бÿллетенĕсене пичетлемеле те пур участкăри суйлав комиççисене салатса памала.

58 статйа. Суйлав бÿллетенĕсене суйлав округĕнче пурнакан халăх чĕлхипе пичетлеççĕ.

59 статйа. Суйлав бÿллетенĕсене Тĕп суйлав комиççийĕ йышăннă формăпа тата пур суйлавçăсене те суйлав бÿллетенĕсем пама çителĕклĕ шутпа пичетлеççĕ.

60 статйа. Округри суйлав комиççийĕнче регистрациленĕ кандидата тăратнă кашни организацин, çавăн пекех тата Чăваш АССР кашни гражданинăн, Чăваш АССР Конституцийĕн 92 статйи тăрăх, çав кандидатшăн пухусенче, пичетре тата урăх майсемпе те ним чăрмавсăр агитацилеме права пур.

VII-мĕш сыпăк

Сасăлас йĕрке

61 статйа. Чăваш АССР Верховнăй Советне суйласси пĕтĕм Чăваш АСС Республикĕпех пĕр кун хушшинче пулса иртет.

62 статйа. Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас куна Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ суйлав срукĕччен 2 уйăх малтан палăртса хурат. Суйлав ĕçлемен кунра пулса иртет.

63 статйа. Суйлав умĕнхи йулашки 20 кун хушшинче участкăри суйлав комиççийĕ кулленех суйлав кунĕпе суйлав ăçта пуласси çинчен пичетлесе йе мĕнле те пулин урăх майпа суйлавçăсене анлăн пĕлтерсе тăрат.

64 статйа. Суйлавçăсем сасă парасси суйлав кунĕнче вырăнти вăхăтпа ирхине 6 сехетре пуçланса çĕрле 12 сехетчен пулса иртет.

65 статйа. Суйлав кунĕнче ирхине 6 сехетре Участкăри суйлав комиççи председателĕ, унăн членĕсем умĕнче; суйлав йешчĕкĕсене тата йышăннă формăпа тунă суйлавçăсен списки пуррине тĕрĕслет, кун хыççăн йешчĕкĕсене хупат те комиççи пичечĕпе пичетлесе хурат, вара суйлавçăсене сасă пама тытăнма чĕнет.

66 статйа. Кашни суйлавçă хăй сасăлат; çавна тума сасăламали çурта пырат, суйлавçăсем сасă парасси вара суйлав бÿллетенне конверт ăшне хурса пичетлесе суйлав йешчĕкне йанипе пулса иртет.

67 статйа. Суйлав çуртĕнче бÿллетенсене тултарма уйрăм пÿлĕм уйăраççĕ, унта сасăланă вăхăтра, сасăлакансемсĕр пуçне урăх никамăн та, çав шутрах участкăри суйлав комиççи членĕсен те, пулма йурамасть; бÿллетене çырса тултармали пÿлĕме пĕр вăхăтрах темиçе суйлавçă кĕртес пулсан, пÿлĕме хăмасемпе йе ширмăсемпе пĕр вăхăтра миçе суйлавçă кĕртнĕ хисеп тăрăх пÿлсе уйăрмала.

68 статйа. Суйлав çуртне пынă суйлавçă участкăри суйлав комиççин секретарне йе паспăрт, йе колхоз кĕнеки, йе профсойуз билечĕ, йе вăл камне пĕлтерекен урăх удостоверени кăтартат, вара суйлавçăсен списки тăрăх тĕрĕсленĕ тата суйлавçăсен спискинче паллă тунă хыççăн, йышăннă образецлă суйлав бÿллетенĕ тата конверт илет.

69 статйа. Çак „Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали Положенин“ 16-мĕш статйи тăрăх, Суйлав çуртне „сасăлама права паракан удостоверенипе“ пынă çынсене Участкăри суйлав комиççийĕ уйрăм списăка çырса пырат, ăна суйлавçăсен списки çумне хурат.

70 статйа. Суйлавçă, суйлав бÿллетенĕсене тултарма уйăрнă пÿлĕмре, суйлав бÿллетенĕнче хăй камшăн сасăлат, çав кандидатăн хушаматне хăварат, ыттисене хуратса хурат, бÿллетенне конверт ăшне хурса, конвертне çыпăçтарса, суйлавçă Участкăри суйлав комиççийĕ вырнаçнă пÿлĕме пырат те, суйлав бÿллетенĕ хунă конверта суйлав йешчĕкне йарат.

71 статйа. Хутла пĕлмен пирки йе пÿçири мĕнле те пулин çитменлĕх пирки хăйсем тĕллĕн суйлав бÿллетенне тултарма пултарайман суйлавçăсем суйлав бÿллетенне тултарма пÿлеме кирек хăш урăх суйлавçа та суйлав бÿллетенне çырса тултарма чĕнсе кĕртме пултараççĕ.

72 статйа. Суйлав çуртĕнче сасăсем панă вăхăтра суйлав агитацине тума йурамасть.

73 статйа. Суйлав çуртĕнчи йĕркелĕхшĕн комиççи председателĕ ответлă пулса тăрат, унăн распорйаженийĕсем унта пынă çынсемшĕн пуриншĕн те обйазателнă.

74 статйа. Суйлав кунĕнче çĕрле 12 сехетре Участкăри суйлав комиççин председателĕ сасăсем парасси пĕтнĕ тесе пĕлтерет, вара комиççи суйлав йешчĕкĕсене уçма тытăнат.

(Йулашки 3-мĕш страницăра).

М

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали ПОЛОЖЕНИ

(Йулашки. Пуçламĕшĕ 2 мĕш страницăра).

VIII-мĕш сыпăк

Суйлав резуљтачĕсене палăртасси

75 статйа. Участкăри суйлав комиççи-не ĕççынни обшчĕствисен йатарласа полсасĕсене шутлакан çуртра, сасăсене тлана чухне, обшчĕствăлă организацисем тата ĕççынни обшчĕствисен йатарлаполномочи панă представителĕсен, çапекех тата пичет представителĕсен ма права пур.

76 статйа. Участкăри суйлав комиççийенчĕксене уçса, панă конвертсен хипе сасăлама хутшăннă çынсен хисее танлаштарса тĕрĕслесе тухаť те, ĕслепиñ резуљтачĕсене протокола çырхураť.

77 статйа. Участкăри суйлав комиççин едседателĕ конвертсене уçаť те, Участри суйлав комиççин мĕн пур членĕсем ĕнче кашни бÿллетен тăрăх сасăлании уљтачĕсене каласа параť.

78 статйа. Депутата суйлама тăратнă кашни кандидат пуçне комиççи секретатата Участкăри суйлав комиççин çав тума полномочи панă членĕсем 2 екмпљар шутлав листи çырса пыраççĕ.

79 статйа. Бÿллетенсене чăн мар тесе утлаççĕ:

а) йышăнман образецлисене тата йыăнман тĕслисене;

б) конвертсăр йе йышăнман образецлă нвертпа панисене;

в) депутата суйламали хисепрен ытлах кандидатсем панисене.

80 статйа. Суйлав бÿллетенĕ тĕрĕсспрви иккĕленÿ тухсан, ыйтăва участкăсуйлав комиççи сасăласа татса параť, синчен протоколра паллă тăваť.

81 статйа. Участкăри суйлав комиççийĕ сăланин протоколне йышăннă формă рăх икĕ екземпљар çыраť, вĕсем çине частькăри суйлав комиççи членĕсем пур, çав шутра председателĕпе секретарĕ бйазатĕљнă ал пусаççĕ.

82 статйа. Сасăлани çинчен çырнă протоколра участкăри суйлав комиççин аксене кăтартмала:

а) сасă пама пуçланă тата парса пĕерни вăхăта;

б) суйлавçăсен списки тăрăх сасă панă суйлавçăсен хисепне;

в) „сасăлама права паракан удостоверени" тăрăх сасă панă суйлавçăсен хисепне;

г) панă конвертсен хисепне;

д) участкăри суйлав комиççине панă зайавленисемпе жалăбăсенче мĕн çинчен каланисене кĕскен çырнине тата участкăри суйлав комиççи йышăннă решенисене;

е) кашни кандидатшăн панă сасăсене шутлании резуљтачĕсене.

83 статйа. Сасăсене шутласа пĕтерне тата протокол çырнă хыççăн, комиççи председателĕ комиççин мĕн пур членĕсем умĕнче сасăлании резуљтачĕсене каласа параť.

84 статйа. Сасăлани çинчен участкăри суйлав комиççийĕ çырнă протоколăн пĕр екземпљарне, Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă кандидатсен шутлав листисен икĕ екземпљарĕпе пĕрле, нарăчнăйпа 24 сехет хушшинче Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Округри суйлав комиççине йараççĕ.

85 статйа. Участкăри суйлав комиççи председателĕн суйлав бÿллетенĕсене пурне те (чăннисене уйрăмăн, тата чăн мар тесе йышăннисене уйрăмăн) участкăри суйлав комиççин пичечĕпе пичетлесе хумала та, сасăлани çинчен çырнă протоколăн иккĕмĕш екземпљарĕпе тата пичетне те сыхласа усрама: хуласенче—ĕççынни депутачĕсен хула Советне, йалти вырăнсенче—ĕççынни депутачĕсен районри Совечĕсене памала.

86 статйа. Ĕççынни депутачĕсен Совечĕсем суйлав бÿллетенĕсене çав округ депутачĕсен мандачĕсене Чăваш АССР Верховнăй Совечĕ çирĕплетиччен сыхласа усрама тивĕç.

87 статйа. Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Округри суйлав комиççийĕ сасăсене Участкăри суйлав комиççийĕсем тăратнă протоколсем тăрăх шутласа тухаť.

88 статйа. Округри суйлав комиççийĕ сасăсене шутлакан çуртра сасăсене шутланă чухне, обшчĕствăлă организацисемпе ĕççынни обшчĕствисен йатарласа полномочи панă представителĕсем, çавăн пекех тата пичет представителĕсем пулма права пур.

89 статйа. Кашни кандидат пуçне Округри суйлав комиççийĕ икĕ екземпљар шутлав листи çырса пыраť, унта депутата суйлама тăратнă кашни кандидат илнĕ сасăсен хисепне паллă тăваť.

90 статйа. Округри суйлав комиççийĕ сасăлани çинчен икĕ екземпљар протокол çыраť, вĕсене Округри суйлав комиççи членĕсем пурте, çав шутра председателĕпе секретарĕ обйазатĕљнă алă пусаççĕ.

91 статйа. Округри суйлав комиççин протоколĕнче çаксене кăтартмала:

а) Округри суйлавçăсен пĕтĕм хисепне;

б) сасăлама хутшăнçă суйлавçăсен пĕтĕм хисепне;

в) депутата суйламали кашни кандидатшăн панă сасăсен хисепне;

г) Округри суйлав комиççине панă зайавленисемпе жалăбăсенче мĕн çинчен каланисене кĕскен çырнине тата Округри суйлав комиççийĕ йышăннă решенисене.

92 статйа. Сасăсене шутласа тухнă хыççăн 24 сехетрен кайа хăвармасăр Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали Округри суйлав комиççи председателĕ, протоколăн пĕрремĕш екземпљарне шутлав листисемпе пĕрле пичетлесе, нарăчнăй урлă Тĕп суйлав комиççине йама тивĕç.

93 статйа. Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутатне суйламали кандидат абсољутлă ытларах сасă илни, урăхла каласан, округра пацă, чăн тесе йышăннă мĕн пур сасăсен çурринчен ытларах илни, суйланнă шутланаť.

94 статйа. Протокола алă пуснă хыççăн, Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали Округри суйлав комиççин председателĕ суйлавсен резуљтачĕсене каласа параť те, Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйланнă кандидата суйлани çинчен удостоверени параť.

95 статйа. Кандидатсенчен пĕри те абсољутлă ытларах сасă илмен пулсан, тивĕçлĕ Округри суйлав комиççийĕ çавăн çинчен протоколра уйрăм паллă тăваť те, Тĕп суйлав комиççине пĕлтерет тата, кунпа пĕр вăхăтрах, чи нумайрах сасă илнĕ икĕ кандидата тепĕр хут баллотировкă тăвасси çинчен пĕлтерет, çавăн пекех тата çĕнĕрен баллотировкă тумали куна, суйлавсен пĕрремĕш турĕ иртнĕ хыççăн икĕ ернерен кайа хăвармасăр, палăртса хураť.

96 статйа. Округра панă сасăсен хисепĕ çав округри сасăлама права пур суйлавçăсен çурринчен сахалтарах пулсан, Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали Округри суйлав комиççийĕ çавăн çинчен протоколра уйрăмăн паллă тăваť те çийĕнчех Тĕп Суйлав Комиççине пĕлтерет, кун пек чухне вара Тĕп Суйлав Комиççийĕ пĕрремĕш суйлавсем хыççăн икĕ ернерен кайа хăмармасăр çĕнĕрен суйлав иртермеле тăваť.

97 статйа. Депутата суйламали кандидатсен тепĕр хут баллотировкине, çавăн пекех тата чăн мар тесе йышăннисен вырăнне çĕнĕ суйлавсене пĕрремĕш суйлавсем ваљљи тунă суйлавçăсен спискисем тăрăх тата пĕтĕмĕшпех çак „Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали Положени" тăрăх туса ирттереççĕ.

98 статйа. Депутат Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн составĕнчен тухса ÿксен, Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ 2 ернелĕ срукра, анчах депутат Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн составĕнчен тухнă хыççăн 2 уйăхран кайа мар, тивĕçлĕ суйлав округĕнче çĕнĕ депутат суйлавне иртермели срука палăртаť.

99 статйа. Кирек кама та, вăл пусмăрласа, улталаса, йунаса йе подкуп туса Чăваш АССР гражданинне унăн Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тата суйланас правине пурнăçа кĕртме чарса тăраť пулсан, 2 çул таран срукăха хупса лартма пултараççĕ.

100 статйа. Советăн ĕçлĕ çыннине йе суйлав комиççин членне, суйлавра суйа документсем тунăшăн йе сасăсене йуриех тĕрĕс мар шутланăшăн—3 çул таран срукăха хупса лартма пултараççĕ.

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председателĕ **З. АНДРЕЙЕВА.**
Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет секретарĕ **Т. ВАСИЛИЕВ.**

Шупашкар хули,
1938 çулти мартăн 6-мĕшĕ.

Колхоз уйхирĕнчи стахановкăсем.

Ÿкерчĕк çинче: (сулахайран сылтăмала) Вăрнар районĕнчи Ленин йачĕпе тăракан колхоз членĕ **А. М. Шарикова**, гектартан 40,7 центнер махорка туса илнĕ; **Д. С. Долгова**—Турхан районĕнчи „Восход" колхоз членĕ, 1937 çулта 283 ĕçкунĕ тунă; **К. И. Малышĕва**—Турхан районĕнчи „Хастар" колхоз членĕ, кулленхи нормăна 200 процент тултарса пыраť.

Цыганов фото-ÿкерчĕкĕ.

Долорес Ибаррури статйи

Республикăлă Испанин хĕрарăмĕсем

Епĕр пухуран тухрăмăр, унта пирĕн умма вăрçă кашни кун каларса тăратакан ыйтусене хĕрÿлĕн сÿтсе-йаврăмăр. Епĕ пухуран тухсан ман пата пĕр çамрăк работницă чупса пычĕ те, халĕ çеç вăрманта пухнă чечек çыххине тыттарчĕ. Хăй йалтах тусанланса пĕтнĕ: вăл укрепленисем тунă çĕрте ĕçленĕ, çавăнтан чупса килнĕ. Вăл хăйсен тăван çĕршывне хÿтлесе хăйсене шеллемесĕр ĕçлекен, республикăна чĕререн йуратакан республикăлă Испанин çĕршер пин хĕрĕсенчен пĕри. Вĕсем республикăна хÿтлесе çапăçакан кашни çыннах хăйсене ĕмĕрхи чуралăхран хăтаракан тесе шутлаççĕ.

Коммунисен партинчен тухса каласа, пухура епĕ республикăна сыхласси çинчен, хĕрарăмсем оборонă ĕçне активлăн хутшăнни çинчен, çар промышленнăçне пур йенчен те вăйлатса пырасси тата резервăсем тăвасси çинчен каларăм. Манăн сăмахсене çĕршер хĕрарăмсем итлерĕç. Вĕсен кăмăлĕсем хавăслăхпа та хумханупа тулнă: епĕ вĕсен шухăшĕсене каларăм. Вĕсем кĕрешесшĕн, ĕçлесшĕн, вĕсем республикăна, унşăн калама çук йавăр вăхăт пулса тăнă тапхăрта, усăлă етемсем пуласшăн. Вĕсем—пирĕн бойецсен амăшĕсем, вĕсен апăшĕсем, хĕрĕсем тата арăмĕсем. Теруеле çухатни вĕсен хастарлăхне чакарман.

Пухура пулнă чух вĕсен шухăшĕсем çаксем çинчен пулнă: заводсем, шахтăсем, уй-хирсем, вăрçă промышленăççĕ... Вĕсенче фронта кайас арçынсене нумайăн ĕçлеме тивет. Хĕрарăмсем вĕсен вырăнне пысăк хастарлăхпа тăрса ĕçлеме хатĕр. Вĕсем мĕн чухлĕ кирлĕ, çавăн чухлĕ ĕçлеме хатĕр. Çав сăмахсем пустуй сăмахсем мар, çук! Пирĕн хĕрарăмсем хăйсем мĕн тума пултарнине пĕрре кăна мар кăтартнă. Мадридри заводсемпе мастерскойсенчи работницăсем, вĕсем çине фашиссен артиллерийĕ снарйадсем каларса йарса тăнă самантра та, станоксене чарса лартман. Кордова провинцинчи Лос Торрес йатлă йалти хĕрарăмсем пур арçынсене те фронта кайма хушнă, вĕсем арçынсем фронтра чухне ĕлĕкхинчен те нумай тыра акнă. Хаен тата Толедо провинцисенчи йалсенчи хĕрарăмсем çакна кăтартнă: хĕрарăмсем арçынсенчен те ытла ĕçлеме пултараççĕ. Вăрçă промышленăçĕнче ĕçлекен хĕрарăмсем арçынсемпе пĕр танах ĕçлеççĕ тата часчасах вĕсенчен те ытлашши ĕçлеççĕ. Республикăлă Испанин хĕрарăмĕсем вăрçăра республиканцăсем çĕнтересси шанаççĕ, мĕншĕн тесен çĕнтерÿре вĕсем хăйсен пусмăрĕ тата асаплăхĕ пĕтнине кураççĕ.

Ун çинчен зала тулнă хĕрарăмсем каласа пачĕç. Вĕсем алă çупнипе, ырласа калакан сасăсемпе тата хăшпĕрисем куççулĕ йухтарнипе каларĕç. Ун çинчен мана чечек çыххине тыттаракан хĕрача та каларĕ.

БАРÇЕЛОНА мартăн 6-мĕшĕ. (ТАСС).

„Епĕ тепĕр хут çуралнă çын"

Мартăн 5-мĕшĕ. Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕн IX-мĕш Çессийĕн трибуни çинче Олга Филипповна Каштанова йулташ.

Вăл, нийепле те тухса каламасăр чăтма пултараймасť. Мĕншĕн тесен, ку Çессия калама çук историлĕ паллă документ—„Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали Положени" пройектне сÿтсе йаваť, çирĕплетет.

Олга Филипповна халь 43 çулта. Çулсен шучĕ сахалах мар пулин те, вăл хавасла, çамрăк чунлă хĕрарăм.

— Епĕ тепĕр хут çуралнă çын, манăн пурнăç лайăх, çав пурнăçа Сталин йулташ туса пачĕ, — тет Олга Филипповна.

Чăнах та Олга хăйĕн ĕлĕкхи пурнăçне тарăхмасăр аса илме те пултараймасť. Вăл чухăн хресчен çемйинче çуралнă, çуралласса та етем йевĕрлĕ çуралман, ĕнесем хупакан картара çуралнă. Çиме çитмен пирки пĕчĕкренех кулаксем патĕнче тарçăра пурăннă. Вĕренес пирки шутлама та май пулман.

— Октаберти Социалисăмлă револуци хыççăн, епĕ тепĕр сывлăшпа сывлама пуçларăм, тет вăл.

1922-мĕш çулта Каштанова йулташ тăлăха йулнă пулсан та обшчествăлă ĕçсене активлăн хутшăнаť. Кĕçех ăна Шупашкара хĕрарăмсен курсне йараççĕ. 1926 çулта парти кандидатне кĕрет, члена 1928 çулта куçаť.

— Парти организаци мана пăхса ÿстерчĕ.

Чăнахах та çак 12 çул хушшинче Олга Филипповна активлă ĕçлекен пулса тăчĕ. Вăл 1934 çултанпа Çĕнĕ Ахпÿрт (Патăрйел районĕ) йалсовечĕн председателĕ пулса ĕçлет. Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕн членĕ, райĕçтăвком членĕ.

— Мĕншĕн-ха манăн ĕçлес мар, мана халăх шаннисĕр пуçне урăх пысăкки, числи нимĕн те çук!

Халăх тăшманĕсем активлă хĕрарăма курайманçĕ. 1935 çулта августăн 5-мĕшĕнче Олга Филипповна çывăрнă вăхăтра чÿречерен пăшалпа переççĕ. 5 уйăх болницăра выртнă хыççăн, Олга ĕçе тухаť.

Кун хыççăн татах та активлăн ĕçлеме пуçларĕ. ССР Сойузĕн Верховнăй Советне суйлас кампанинче активлăн хутшăнса ĕçлерĕ, участкăри суйлав комиççийĕн членĕ пулчĕ.

— „Тепĕр виç кунтан мартăн 8-мĕшĕ. Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен коммунисла кунĕ. Епĕ вăл куна кĕтетĕп, хамăн обшчествăлă ĕçе лайăхлатса кĕтетĕп. Епĕ те çеç мар, пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен хĕрарăмĕсем ăна хатĕрленсе кĕтеççĕ. Вăл кун—фашисăма хирĕç кĕрешмели кун..."

„Сылтăмла-троцкисла блок" текен ушкăнри тискер çынвĕлеренсене, шпионсене, фашисла заговоршчиксене Бухарина, Рыкова, Йагодана т. ыттисене те тĕппипех пĕтермеле. Епĕр вĕсене пурне те персе пăрахма ыйтатпăр. Епĕр пирĕн мухтавлă чекиссене тата вĕсен руководителне—Сталинла Наркома Н. И. Иежова хĕрÿлĕн саламлатпăр. Епĕр Сталинла Тĕп Комитет тавра тата халăхсен йуратнă çулпуçĕ тăван Сталин тавра тата таччăнрах пĕтĕçетпĕр, сисĕмлĕхе тата та çÿлерех çĕклетпĕр"...

Олга Филипповна Каштанова хăйĕн тĕлейлĕ, савăнăçлă пурнăçĕпе хĕпĕртет. Унăн ывăлĕ тулли мар вăтам шкулта историпе преподавател пулса ĕçлет.

Олга пек Ленин—Сталин пăртине чунран йуратса активлă ĕçлекен хĕрарăмсем пирĕн республикăра çĕршерĕн. А. С.

Хĕрарăм Арктикăра

Бољшевиксем Арктикăна çĕнтерсе илес тĕлĕшпе питĕ те пысăк ĕççем туса иртерчĕç. Вĕсем унăн чи инçетри вырăнĕсене çитрĕç, халĕ ĕнтĕ Арктикăн вăрăм çĕрне-кăçне сталинла çутă çутатса тăраť. Çĕр чăмăрĕн чи çурçĕрти вырăнне—Çурçĕр полюсне—бољшевиксем çĕнтерсе илчĕç.

Арктикăна çĕнтерсе илнĕ çĕрте арçынсемпе пĕрле епĕр те, социалисăмла тăван çĕршывăн хĕрĕсем те ĕçлетпĕр. Çĕршер совет хĕрарăмĕсем хăйсен вăйне Арктикăра ĕçлес çĕре хураççĕ.

Халљхи вăхăтра пĕр полљар станцисенче кăна 72 хĕрарăм ĕçлет: метеорологсем 17, радиссем 6, магнитологсем 4, синоптиксем 3, механиксем 2, пĕр моторискă, 3 врач т. ыт. те.

Пиншер хĕрарăмсем Игаркăри, Нордвикăри, Колымри, Кировскри, Баренцбургри стройкăсемпе предприйатисенче ĕçлеççĕ. Вĕсенчен нумайĕшĕсем стахановла ĕçсен паха тĕслĕхĕсене кăтартаççĕ.

Çамрăк та хастарлă комсомолка Лљудмила Шрадер 1933 çулта хĕлкаçакансемпе пĕрле Уелена кайрĕ. Арçынсемпе пĕрле вăл полљар станцине туса лартрĕ. „Челљускин" пароход Карск тинĕсĕн пăрĕсем хушшинче путсан, Лљудмила Шрадер пĕтĕм тĕнчене хăйĕн геройлăхне кăтартса пачĕ. Уелен çинче хĕлкаçакансен аслă радисĕ—Посников чирленĕ. Çăлса хăварас ĕççем пынă вăхăтра икĕ уйăх хушши Лудмила Шрадер вахтăран тухмасăр кунĕн-çĕрĕн радис пулса ĕçлерĕ. Правителства тата çĕршыв çамрăк полљарницăн геройлăхне тивĕçлипе хакларĕç. Лљудмила Шрадера Ĕçлĕх Хĕрлĕ Йалавĕн орденне парса награддăланă.

Акă И. Л. Русинова. Унăн Арктикăри ĕçĕ 17 çул кайарах, 1921 çулта пуçланнă Вăл Кĕçĕн Кармакул тата Маточкин шар çинче метеорологилĕ сăнавсем туса иртернĕ. 1932 çулта „Сибирйаков" çинчи експедицине хутшăнса ĕçленĕ, уншăн ăна правителствă Ĕçлĕх Хĕрлĕ Йалав орденне парса наградăланă.

Хĕрарăм-врач, хĕрарăм-педагог инçетри йалсене, Çурçĕрти халăхсем патне кулљтурă илсе пыраť.

Е. С. Кузьмина врач Чукоткăна Лаврентий заливĕнчи кулљтбазăна ĕçлеме кайрĕ. Нумай вăхăт хушши пурăнакансене медицинă пулăшăвĕсемпе усă курма хăнăхтарма ăна май килмен. Врач пропагандис пулса тăраť. Çине тăрса ĕçленĕ хыççăн, Кузьмина, йулашкинчен, вырăнти халăх шанăçне çĕнтерсе илет, вăл халăх хушшинче хăйĕн активлă пулăшаканĕсене—санитаркăсене те тупаť. Е. С. Кузьмина нумайах пулмасť материке килчĕ. Çывăх вăхăтрах çĕнĕрен Арктикăна кайма хатĕрленет.

Вăтă педагогăн Йегатерина Семеновна Рубцовăн та Чукоткă çинчи Провидени бухтин халăхĕсем хушшинче тĕттĕмлĕхпе тата кайа йулнăлăхпа çине тăрса кĕрешмеле пулнă. Вăл вирлĕн ĕçленипе, унăн Сиреник йаленчи шкулĕ халĕ Чукоткăри шкулсенчен чи лайăххи пулса тăраť.

Педагогла ĕçрен пуçларăм епĕ те хамăн Артикăри пурнăçа. Малтанхи хут Арктикăна 1930 çулта кайрăм. Лаврентий заливĕнчи кулљтбазăра учител пулса ĕçлерĕм. Çав вăхăтрах хĕлкаçакансен метеостанцинче ĕçлеме пуçларăм та çĕнĕ квалификаци туйантăм—метеоролог пултăм.

Пĕррмĕш хут хĕл каçнă хыççăн Мускава таврăнсан, епĕ метеорологсен курсне кайрăм. Вара 1933 çулта „Челљускин" пароход çинчи експедиципе пĕрле метеролог пулса Врангел утравĕ çинче хĕл каçма кайрăм. Пароход çинче, вăл кусса çÿренĕ вăхăтра, епĕ метерологилĕ сăнавсем туса пытăм. Пăрсем хĕссе пăчăртана „Челљускин" путсан, хĕрарăмсем (епĕр вунăн пулнă) çав хăрушăлăха паттăрăн тÿссе иртерчĕç. Пароход çинчи йапаласене пушатса йулас пĕтĕм ĕçре епĕр арçынсенчен йулмасăр ĕçлерĕмĕ.

Материк çинче иртернĕ çулталăкпа епĕ тивĕçлĕн усă куртăм. Епĕ техник-синоптик йатне илме екзамен патăм та 1935 çулта çĕнĕрен Белый утравĕ çине (Карск тинĕсĕ) хĕлкаçма кайрăм.

1936 çулта Мускава таврăнсан, епĕ каллех хамăн квалификацине çĕклеме тытăнтăм. Çурçĕр тинĕç çулĕн Тĕп тытăмĕнче ĕçлетĕп тата вĕренетĕп. Анчах Арктика йаланах кăмăл туртаť. Кăçал епĕ обйазателнă хĕл каçма кайатăп.

Арктикăра нумай ĕççем тунă, анчах нумайĕшне тата тумала-ха. Пирĕн валљи, хĕрарăмсем валљи, унта усăлă, тухăçлă та интереслă ĕç темĕн чухлĕх.

Орденоносец О. Н. Комова
(Челљускин" епопейин участници).

ССР Сойузĕнчи Хĕрарăмсен ĕçне кăтартакан фактсем тата цифрасем

ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет составĕнче хĕрарăмсем 101 çын пулнă. Халĕ ССР Сойузĕн Верховнăй Советĕнче хĕрарăм-депутатсем—187.

* * *

Йалсоветсен йулашки суйлавĕсем хыççăн, йалсоветсен членĕсем хушшинче хĕрарăмсем 26,2 процент пулнă, вăл 1926 çулхи суйлавсем хыççăнхипе танлаштарсан икĕ хут пысăк пулаť. Йалсовет председателĕсем пулса ĕçлекен хĕрарăмсен хисепĕ 11 хут ÿснĕ. Хула совечĕсен составĕнче хĕрарăмсем—30 процент.

* * *

Нацилĕ республикăсен хĕрарăм-работницисемпе колхозницисем государствă управленинче активлăн хутшăнса ĕçлеççĕ. Узбекистанри йалсоветсен составĕнче узбечкăсем—22 процент шутланаççĕ. Казах республикĕнчи йалсоветсен составĕнче хĕрарăмсем 23 процент шутланаççĕ. Казах республикĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитетĕнче—хĕрарăмсем 65 çын.

* * *

Сталинла пйатилеткăсен çулĕсенче работницăсен тата хĕрарăм-служăшчисен хисепĕ пилĕк мĕлйун ытла ÿснĕ. 1914 çулта Сормоври заводра мĕн пурĕ те 246 хĕрарăм кăна ĕçленĕ. Вĕсем квалификацисĕр ĕçре ĕçлекенсем уборщицăсем, сторожихăсем пулнă. Халĕ унта 4.670 работницă ĕçлет. Вĕсенчен сварщицăсем, слесăрсем, токăрсем пулса ĕçлекенсем—3.200, инженерсем тата техниксем пулса ĕçлекенсем—196.

* * *

Социалисăмла хирсенче 18 мĕлйун хĕрарăм-колхозницăсем ĕçлеççĕ. 1936 çулта колхоз правленисен членĕсем пулса ĕçлекен хĕрарăмсем 18 процент шутланнă, выљăхчĕрлĕх фермисен пуçлăхĕсем пулса ĕçлекенсем 16 процент, выљăхчĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен бригадăсен бригадирĕсем пулнисем 22 процент, звенийевойсем 67 процент, МТС агрономĕсем 10 процент шутланнă. 1937 çулхи йанварĕн 1-мĕшне трактористкăсем 43.900 пулнă, халĕ вĕсем 57 пинрен те ытла шутланаççĕ.

* * *

Ăслăлăхпа техникă йенĕпе те хĕрарăм чылайах мала кайрĕ. Пирĕн предприйатисенче хĕрарăм-инженерсемпе техниксем 100 пин çын ĕçлеççĕ. Ăслăлăхпа тĕпчев учрежденийĕсенче 1936 çултах та аслăлăх работникĕсем пулса ĕçлекен хĕрарăмсем 12 пин çын пулнă, медицинă учрежденийĕсенче хĕрарăм-врачсем 42 пин çын пулнă (патша Российĕнчипе танлаштарсан, 21 хут ытла пулаť).

* * *

Совет Государстви хĕрарăма килхушшинчи ĕçсенчен хăтаракан кулљтурăпа йăла учрежденисен строителствине çулсеренех пысăк укçа-тенкĕсем уйарса параť.

1936 çулта ача çуратмали çуртсене, йаçлĕсене, консулљтацисене, ачасен санаторисене тытса тăма бÿджет тăрăх 1.250 мĕлйун тенке пăхнă пулсан, 1937 çулта ку хисепе 2 мĕлйарда çити ÿстернĕ.

* * *

Йавăр çын пулнипе отпуска кайнăшăн пĕр 1936 çулта кăна 560 мĕлйун тенкĕ тÿленĕ. Колхозницăсем те йавăр çын пулнипе отпуск илеççĕ, вĕсене уншăн ĕçкунĕсем шутласа параççĕ. 1937 çулта март уйăхĕ пĕтеччен, ача амăшсем-колхозницăсем отпуск вăхăтĕнче 100 мĕлйун тенкĕ укçа тата 10 мĕлйун пăт тыра илнĕ. Нумай ачалă амăшсене пулăшма тесе 1938 çулхи йанвар тĕлне совет государстви 1.150 мĕлйун тенкĕ тÿленĕ.

* * *

Совет çĕршывĕн малта пыракан хĕрарăмсен нумайĕшĕсем Совет Сойузĕн пысăк наградисене илме тивĕçлĕ пулчĕç. Ленин орденне 349 хĕрарăм илнĕ, Ĕçлĕх Хĕрлĕ Йалав орденне—334, Хĕрлĕ Çăлтăр орденне—20 хĕрарăм илнĕ. „Знак Почета" орденĕпе 602 хĕрарăма наградăланă.

(ТАСС).

Выставкă организациленĕ

Хĕрарăмсен Пĕтĕм тĕнчери кунне хатĕрленсе иртернĕ май Шупашкарти Максим Горький йачĕпе тăракан библиотекăра хĕрарăмсен халљхи пурнăçне тата вĕсен политикăпа кулљтурă ÿсĕмне кăтартакан выставкă организациленĕ.

Кунсăр пуçне тата библиотекăра хĕрарăмсен кунĕ тĕлне вуламали кĕнекесен витринине организациленĕ.

И. Е.

СОВЕТА ХИРĔÇЛЕ „СЫЛТĂМЛА-ТРОЦКИСЛА БЛОК“ ПРОЦЕСĔ

Процес дневникĕ

Мартăн 5-мĕшĕнчи ирхи лару

ССРС Верховнăй Сучĕн Çар Коллегин мартăн 5-мĕшĕнчи ирхи ларувĕн малтанхи пайĕнче айăпланакан Раковскине допрос тăваççĕ.

Раковский, хăй йышăннă тăрăх, 35 çул хушши ĕнтĕ чи усал та хайар обер-бандит Троцкин „политикăлă тата личнăй тусĕ“ пулса тăрат. Çак пĕтĕм çулсенче Раковский пĕр улшăнмасăр, ун майлă тăракан çын, унăн оруженосецĕ пулнă, унпа çыхăну тытса тăрассине татман, çав фашисăм тарçи хушнă ĕçсене тÿррĕн, тĕрĕс туса пынă.

Фактсем шеллевсĕр, ÿкĕте кĕмеççĕ. Раковский пичĕ çинчи мас кăна çурса пăрахнă, ун сăнĕ суд умĕнче уççăн курăнат: вăл—тискер-кийкла, чейе тăшман, фашисла разведкăсене сутăннă чи хайар та усал шпион, вăл социалисăма, совет халăхне хирĕç хайар çилĕпе тарăхса тăрат.

1924 çултах-ха Раковский „Интеллидженс-Сервиса“ сутăннă. Троцкий сĕннипе вăл Англи разведкин шпионĕ пулса тăнă.

Унтан тата Раковскин шпионла пофессийĕ чылай маларах пуçланнă тесе шутламашкăн пур сăлтавсем те пур. Вăл суда çакна пĕлтерет: 1924 çулта Лондонра ун патне, Англи разведки хушнă тăрăх, „Интеллидженс-Сервис“ агенчĕсем Армстронгпа Леккерт пынă, ăна Германи разведки валлъи империалисăмлă вăрçă вăхăтĕнче çырнă çыру кăтартнă. Çырура Румыни çинчен шпионла сведенисем пулнă. Çав çыру айĕнче Раковский алпусни пулнă.

Судра Раковский, вăл суйа ĕç пулнă, епĕ чăн-чăн ал пусни пулман, теме хăтланат, ку тĕлĕшпе Вышинский йулташ паракан ыйтусем çине çыхăнусăр, пăтранчăк ответсем парат.

Государствă йенчен айăплаканĕ Вышинский йулташ судра Раковскин ку отвечĕ тĕрĕс мар, тесе шухăшлани çинчен калат. Çапла калама унăн права пулнах. Армстронгпа Леккерт Раковскине кăтартнă çыру суйа мар, ăна чăннипех те вăл çырнă пулнă, ун чухнех-ха, тĕнче вăрçи вăхăтĕнчех, Раковский, Румынире пулнăскер, Германи разведкин агенчĕ пулса тăнă, теме пулат.

Бандитсем пĕр-пĕрин хакне тăнă. Совета хирĕçле тăшманла шухăшсене вĕсем пĕрле пурнăçа кĕртсе пынă. Партине тата совет влаçне хирĕç кĕрешес тĕлĕшпе йутçĕршывсен разведкисем валлъи шпионла ĕçсене вĕсем пĕрле туса пынă. Раковский кăтартса панисем ĕнтĕ, вĕсем мĕнтери айала, ирсĕр лачакана анса кайнине кăтартса параççĕ.

Раковский суда хăй Троцкипе 1928-мĕш çулта тĕлпулни çинчен пĕлтерет. Вăл тĕлпулу Троцкине Алма-Атана ссылка йарас умĕн пулнă. Троцкий ун чухне хăйпе шухăшлă Раковскипе хăй Алма-Атаран йутçĕршыва тарма шухăшласа хунă план пирки канашланă. Раковский, Вăтам-Азин пушхирĕсемпе тăвĕсем урлă йутçĕршыва мĕнле майпа тарма шухăшлатăн, тесе ыйтсан, Троцкий ăна çапла каланă: епĕ „Интеллидженс-Сервис“ çине шанатăп, тенĕ; тата çавăнтах, хăй, Троцкий, 1926-мĕш çултанпах, „Лена-Голъдфилъдс“ йатлă концессин пĕр представителĕ урлă „Интеллидженс-Сервиспа“ çыхăнса тăни çинчен вăрттăн йĕркепе пĕлтернĕ; Англи резведки мана Совет Сойузĕнчен тарма пулăшат тенĕ.

Çапла пулса пынă контрреволъуцилĕ ĕçсем. Раковский „Интеллидженс-Сервиса“ шпионла материалсем парат, çавнах тăват Троцкий те. Раковский Англи разведки валлъи çĕнĕ агентсем пухат. Троцкий çав разведкă хăйсемшĕн тунă хăш-пĕр ĕçщĕн, пулăшушăн ответлесе, Англи консерваторĕсене Англипе Совет Сойузĕ хушшинчи ĕçлĕ çыхăнусене татма пулăшат. Вăл ССР Сойузĕпе инцидент тăвас ĕçе мĕнле майпа лайăхрах майлаштармали çинчен „чулçамкалă“ Хикс консерватора консулътаци парат. Вăл Аркос çине тапăнма кирлĕ тесе ăс парат. Ку çеç мар-ха, вăл хăйĕн Аркосри подручнăйĕсем урлă Хикса ĕçлĕ çыхăнусене татма кирлĕ „сăлтав“ туса парат, провокацилĕ суйа документсем туса хатĕрлет, вăл документсене Лондонри троцкиссем Аркос çуртне вăрттăн пырса пăрахнă:

Мĕн пур ирсĕр ĕç витĕр тухнă бандитсен „политикăлă тата личнăй туслăхĕ“ çавăн пек ĕнтĕ.

Пĕр йунлă интерессемпе пĕрлешнĕ шпионсене тата путсĕрсен çав çывăх туслăхĕ, çапла пĕрле ĕçлесси Троцкине Совет Сойузĕн чиккисен лешйенне кăларса ывăтнă хыççăн та Раковскине ăрĕсличчĕнех, пулса пынă.

1934 çулхи сентăбĕр уйăхĕнче Раковский, хĕрлĕ хĕрес обшчествин совет делекацин пуçлăхĕ пулса, пĕтĕм тĕнчери конференцине Токиона кайат. Унта Йапонири пуç пулса тăракан ушкăнсенчи пĕр темĕнле пысăк чинлă çын ăна Йапони резведкипе çыхăнса ĕçлеме сĕнет, „есĕр хăвăр (урăхла каласан, Раковский) тăракан йухăм (урăхла каласан, троцкисăм) интересĕсемшĕн ĕçлĕр“,—тет ăна çав çын.

Резулътачĕ паллах;

— Совет Сойузне епĕ Йапони шпионĕн мандачĕпе таврăнтăм,—намăссăрăн пĕлтерет айăпланакан Раковский.

Раковский Францири сылтăмла-буржуалă ушкăнсен представителĕсемпе çыхăнат, Францине Совет Сойузĕ пĕр-пĕринпе çывхарса туслă пуласине хирĕç аркатулă ĕç туса пырат.

Пĕр тăшманла ĕç хыççăн тепри пулса пырат. Сутăнчăкла ĕç хыççăн сутăнчăкла ĕç пырат. Троцкисла çĕлен калтасенчен пĕри, Румыни çĕрулпучĕ, вĕçне çитийех ултавçа тухнă авантурис, вăл совет халăхĕн ылханлă та ирсĕр тăшманĕ Троцкий панă заданисене, хăйсемшĕн пуриншĕн те хуçа пулса тăракан фашисла агрессорсем панă заданисене тăрăшса пурнăçа кĕртсе пырат.

Раковскин тăшманла усал ĕçсене допрос пĕтĕмĕшпех уçса кăтартат. Прокурор Вышинский йулташ Раковский кăтартса панисенчен вывод тусан, унтан, çак пĕтĕм преступленисене мĕнле хак памала, тесĕ ыйтсан, тăрă шыв çине кăларнă шпионăн пĕр çакна тăвасси çеç йулат: хăй сутăнчăкла ĕç тунине, совета хирĕçле ирсĕр ĕçсем тунине, фашисăм интересĕсемшĕн государствăлă переворот тума хатĕрленнине, „сылтăмла-троцкисла блок“ фашисла агрессин отрйачĕ пулса тăрат иккенне вăл пĕтĕмпех йышăнат.

* * *

Ирхи ларун иккĕмĕш пайĕнче суд айăпланакан Зеленскине допрос тума тытăнат.

Револъуципе совет халăхне хирĕç тунă хăйĕн хăрушă та ирсĕр, усал ĕçĕсем çинчен Зеленский тĕлĕнмеле намăссăрлăхпа каласа парат. 1911 çулта ăна Самарти жандарм управленийĕ хăйĕн хыпарсем парса тăракан агенчĕ туса хунă. Охранкăра вăл „очкастый“, унтан „селаф“ йат илет. Кун хыççăн кăшт вăхăт иртсессĕнех, унăн „службă спискинче“ вăл çакăн пек „ĕçсем“ тунине çырса хунă: вăл Самарти социал-демократилĕ организацин руководителĕсене жандармсене тыттарнă, Самарти пĕтĕм социал-демократилĕ организацине аркатса тăкма хатĕрленнĕ, вăл ĕçе пурнăçа кĕртнĕ.

Çапах та, Зеленскин правокаторла стажĕ кунпах пĕтмест-ха.

Государствă йенчен айăплакан Вышинский йулташ ăна, вăл Самарти жандарм управленипе кăна мар, тата Саратовпа Оренбургри охранкă отделенийĕсемпе те çыхăнса тăни çинчен аса илтерет. Хуçисем хăйсен шанчăклă йыттине хакланă. Зеленский хăйĕн провокаторла ĕçĕсене тума тытăннă чухне ăна „уйăхне 25-шер тенкĕ шалу панă, кăштах вăхăт иртсессĕнех вăл... 100 тенкĕ илме тытăннă“.

Вышинский йулташ Оренбургри охранкă çырнă отношенине вуласа парат. Вăл отношенире охранкă руководителĕ: „Пĕлтерме ыйтатăп, йулашки вăхăтра Зеленскийе мĕскер пулма пултарнă-ши?“ — тесе ыйтса çырнă. Çакна илтсен ирсĕр сутăнчăк Зеленский хăйне „ашшĕ-амăшне астуман Иван пек“ кăтартма хăтланат. Провокатор Зеленскипе çавăн пекех Саратоври охранкă та интересленнĕ.

Прокурор калат: Апла тăк, пурте сирĕнпе çыхăну тытма тăрăшнă, сирĕн кун-çулăршăн тăрăшнă. Çапла-и ку йе апла мар-и?—тет.

„Очкастый“ ответлет: Фактсем çавăн пек.

Хăйне тăрă шыв çине кăларасран хăраса, Зеленский çĕнĕрен капиталисăм туса хума тăрăшакан сылтăмрисен фашисла банди çумне пырса çыпçăнат. Вăтам Азире пулнă чух вăл, буржуалă националиссемпе пĕрле, пур çĕрте те, пуринчен те сăтăрлă ĕçсем туса пырат. Вăтам Азире колхоз строителствинче пулнă пысăкран та пысăк сăтăрла ĕçсене вăл туса пынă ĕнтĕ.

Обер-бандит Зеленский йертсе пынипе Центросойузра сăтăр туса пурăннă сылтăмла-троцкисла бандăн сăтăрçисемпе диверсанчĕсем, пуринчен те малтан, пурне те кирлĕ таварсемпе суту-илÿ тăвас ĕçе çĕмĕрсе пынă. Çапла 1936 çулăн пĕрремĕш кварталĕнче Курск облаçĕнчи нумай районсем ерни-ернипе сахăр илеймесĕр пурăннă. Ленинград облаçĕнчи районсем нумай вăхăт махоркă илеймесĕр пурăннă. 1936 çулта Белоруççири чикĕ хĕрринчи районсенчен чылайĕшĕ нумай вăхат хушши çăкăр илеймесĕр пурăннă. Çав çулах Центросойузра пулнă вредителсем, Зеленский хушнă тăрăх, Мускавра 50 вакун çăмарта çĕртсе йанă.

Фашисла кайаш Зеленский малала пĕр именмесĕр çакна кăтартса парат: суту-илÿ инспекцийĕ суту-илÿ магазинĕсемпе лавкисене тĕрĕслесе пăхнă хыççăн, 1936 çулăн пĕрремĕш кварталĕнче 3.700 лавкара тăвар пулманни палăрнă. 2 пин лавкара сахăр пулман. 1.600 лавка махоркăсăр ларнă.

Зеленский тата унпа пĕрле сăтăрласа пурăннă çынсем çу туса кăларас, унпа суту-илÿ тăвас ĕçре тунă преступленисен сăмхине сÿтсе пырса, Вышинский йулташ ыйтат:

—Сирĕн организацин çу ĕçĕпе çыхăнса тăракан членĕсем çу çине кĕленче ванчăкĕсем пăрахса йанă тĕлсем пулман-и?

Зеленский. Çу ăшĕнче кĕленче ванчăкĕсем пулнисем палăратчĕç.

Вышинский. „Пулнисем палăратчĕç“ мар, вĕсене унта йатарласах пăрахнă пулнă. Есĕр уйрăмлăха ăнланатăр: кĕленче ванчăкĕсене унта пăрахса йанисем пулнă. Ун пек тĕлсем пулнă-и йе пулман-и?

Зеленский. Пулнă.

Тавар илекенсене пĕрмайах тавара виçерен катăк парса улталани, тавар çавăрăнăçне чарса лартни, калама çук пысăк растратăсем туни, вăрлани, повстанчески ушкăнсем тăвас тĕллевпе коопераци аппаратне есерсене, меншевиксене, анархиссене, шургвардейцăсене пухса лартса пыни, — акă ĕнтĕ Зеленскин ирсĕр преступленилĕ „ĕçĕсем“.

Центросойузăн йутçĕршыври бÿровĕ урлă Зеленский совет кооперацийĕ мĕнле ĕçлени çинчен йутçĕршывсене елеклĕ информацисем йарса тăнă. Зеленский çакна кăтартса панă: вăл англири кооперативлă партин лидерĕпе Александерпа, вăл парти сылтăмрисене, вĕсем влаçа алла илес-мĕн пулсан, пулăшу парасси çинчен каласнă.

Айăпланакан Зеленскийе допрос туса пĕтернĕ хыççăн, судăн кăнтăрлахи ларăвĕ пĕтет. (ТАСС).

Суд, айăпланакан Бухарина допрос тума пуçлат.

Вышинский йулташăн ыйтăвĕсем вут çулăмĕ пек тĕл тивнипе, Бухарин çакна йышăнат: „сылтăмла-троцкисла блок“, ССР Сойузне вакласа уйăрма, Украинăна, Белоруççине, Приморйене совет çĕршывĕнчен татса илме килĕшсе, Германири, Йапонири, Англири агреççилĕ ушкăнсемпе килĕшÿ тунă.

— А сăтăр тунисем тĕлĕшпе мĕнле?—Вышинский йулташ çапла пит практикăлă ыйту парат „сылтăм-троцкисла блокăн“ мĕскĕн теоретикне.

Бухарин, сăмаххисене шăл витĕр кăларса, контрреволъуцилĕ блок хăй умне, совет çĕршывĕн оборонă хăватне ишĕлтерес тесе, сăтăр тăвас задачă лартнă, тесе йышăнат.

— Диверçилĕ ĕçсем тĕлĕшпе мĕнле пулнă?—çаплах ыйтса тĕпчет государствă йачĕпе айăплаканĕ.

Бухарин, вăл хăй „пĕтĕмĕшлĕ йертсе пырас ыйтусем тĕлĕшпе, идеологи йенĕпе“ çеç ĕçленĕ тесе, ответ парасран пăрăнма хăтланат. Вăл пăтратма, каламасăр хăварма пăхат. Йулашкинчен çапах та Бухарин—„сылтăмла-троцкисла блок“ восстани тумали отрйадсем тĕлĕшĕпе те ĕçленĕ, вăл, Бухарин, çав сийенлĕ ĕçсемшĕн ответ тытмала, тесе йышăнат.

Прокурор ыйтнипе, айăпланакан Рыковăн ирĕксĕрех çакна йышăнмала килет: Сергей Миронович Кирова тискерле вĕлернин органи заторĕсенчен пĕрийĕ—Йенукидзе, „сылтăмла-троцкисла блокра“ çав блокăн сылтăмри пайĕн представителĕ пулнă.

Çав тĕлĕшпе ыйтсан, Йагода—центр Кирова вĕлересси çинчен решени йышăнна ларура Рыковпа Йенукидзе пулнă, тесе калат.

Государствă йачĕпе айăплаканĕ—Бухарин 1918 çулта Владимир Ильич Ленина арĕслесе вĕлерме мĕнле хатĕрленни çинчен ыйтса тĕпчет.

Бухарин—„сулахай коммуниссен“ Ленина, Сталина тата Свердлова арĕслемели план пулнă, тесе йышăнат, анчах вăл вĕсене вĕлерме кăтарту панине тунат.

Бухарин çавăн пек каланă май, государствă йачĕпе айăплаканĕ судран свидетеле „сулахай коммуниссен“ ушкăнĕнче пулнă Йаковлевăна, Осинскине, Манцева тата сулахай ес-ерсен Тĕп Комитечĕн членĕсем пулнă Карелинпа Камкова чĕнме ыйтат. Суд çав çынсене свидетеле чĕнмеле тăват.

Унтан Бухарин, лекторăнни пек сăсăпа, тĕрлĕрен вĕçкĕнле сăмахсем хуша-хуша хурса, „сылтăмла-троцкисла блокăн“ установкисем çинчен калама пуçлат.

Суд председателĕ Бухарина вăл хăй совета хирĕçле преступленисем мĕн-мĕн туни çинчен калама хушат.

Малала суд, Бухарин 1918 çулта Ленина, Сталина тата Свердлова вĕлерме хăтланни çинчен тĕпчесе пĕлет. Прокурор айăплаканана вăл хăй йутпатшалăхсенче пурăннипе çыхăнса тăракан ыйтусене парат.

Бухарин çакна йышăнат: вăл 1912—13 çулсенче Австрире пурăннă. Австрире пурăннă хыççăн, вăрăм вăхăт хушши Америкăра пурăннă, унтан Роççийăна Йапони урлă таврăннă, пĕр вăхăт хушши Йапонире пурăннă.

Прокурор çапла ыйтат: ăна, Бухарина, Америкăра йе Йапонире разведкă оргăнĕсем агента кĕртмен-и? Бухарин пит тарăхса кайнă пек туса кăтартат. Анчах суд председателĕ: прокурор ыйтăвĕсем—пит саккунлă ыйтусем, тесе ăнлантарса парат.

Бухарин, йутпатшалăхран револъуцилĕ Роççийăна таврăнсанах, хăйĕн ирсĕр алисемпе ĕççыннисен генилĕ çулпуçне—Владимир Илйич Ленина вĕлерме шут тытнă.

Бухарина малала допрос тăвассине мартăн 7-мĕшĕнчи ирхи ларăва куçараççĕ. (ТАСС).

Мартăн 5-мĕшĕнчи каçхи лару

ССР Сойуз Верховнăй Сучĕн Çар Коллăгийĕн мартăн 5-мĕшĕнчи каçхи ларăвĕ айăпланакан Икрамова допрос тунипе пуçланат.

Икрамов çапла кăтартса парат: вăл иртнĕ вăхăтра буржуалă-националисла ушкăнсен членĕ пулнă, 1923 çулта троцкис пулнă, 1928 çулта Узбекистанри „Милли истиклял“ текен национал-фашисла организацине кĕнĕ. Çав организацире тăракансем Абит Саидов гражданина, вăл Узбекистанри национал-фашиссене тăрă шыв çине кăларма тăнăшăн, вĕлернĕ.

Узбекистанри национал-фашиссем хресченсен хуçалăхне касăлтарса, коллективизаци ĕçне пăсса пынă. Вĕсем çĕрмамăкне пин-пин тоннă пĕтернĕ, районсенчи строителствăна саботаж тунă, хула хуçалăхĕнче сăтăрланă. Национал-фашисла провокаторсем çавăн пек майсемпе Узбекистанри хресчен халăхне совет влаçĕнчен уйăрса пăрахма хăтланнă.

Икрамова, Бухарина тата Ходжайева ыйтса тĕпчесе, суд çакна палăртат: Узбекистанри национал-фашиссем, „сылтăмла-троцкисла блок“ тÿррĕмĕнех хушнипе, англи империалисăмĕн Вăтам Азири совет республикисенчи агентури пулса тăнă.

Çакăнпа айăпланакан Икрамова допрос туса пĕтереççĕ.

Государствă йачĕпе айăплаканĕ çакна палăртат: „сылтăмла-троцкисла блок“, айăпланакан Бессонов урлă, йутпатшалăхсенче емиграцире пурăнакан ес-ерсемпе, вĕсен пуçлăхĕсенчен пĕри пулса тăракан Масловпа, пĕр пулса ĕçлеме договор тунă,—Маслов Прагăра пурăнат, вăл пĕр вăхăтрах Полъшăри, Румынири, Болгарири тата Йугославири „ушкăнсенчен“ укçа илсе тăрат. Çав вăхăтрах тата ес-

Чăваш АССР Еçтăвакан Тĕп Комитечĕн IX-мĕш Çеççийĕ

Мартан 6-мĕшĕнче, ирхи ларура ЧАССР Тĕпĕçтăвком секретарĕ—Т. В. Василйев йулташ „Чăваш АССР Верховный Советне суйламали Положенин“ пройекчĕ çинчен тунă доклад тăрăх пренисем пычĕç.

Пренире çак йулташсем тухса калаçрĕç: Матвейев (Çĕмĕрле райĕçтăвком председателĕ), Захаров (Финанс халăх комиссарĕ), Родионова (Тăвай райĕçтăвком председателĕ), Филиппов (Верховнăй суд).

Т. В. Василйев йулташ хăйĕн йулашки сăмахĕкче, тухса калаписемпе пуринпе те килĕшсе, Чăваш АССР Ĕç Тăвакан Тĕп Комитечĕн членĕсем «Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали Положенине» пĕркăмăллăн çирĕплетессе шанмала тесе палăртат.

Кун хыççăн, Çеççи «Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали Положени» пройектне кашни статйинех вырăсла тата чăвашла вуласа çирĕплетет.

«Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали Положенине» çирĕплетнĕ хыççăн, пĕтĕм Çеççи харăсăн ура çине тăрса алă çупат. Залăра:

— Сывă пултăр Сталинла Конституци! Сывă пултăр чăваш халăхĕ! Сывă пултăр пирĕн аслă, йуратнă Сталин! тесĕ саламланисем илтĕнеççĕ. Нумайччен алă çупаççĕ.

ССР Сойузĕн Верховнăй Совет депутачĕ—Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председателĕ **З. А. Андрейева** йулташ йулашки сăмах каласа Чăваш АССР. Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕн IX-мĕш Çеççине хупат.

Совет çĕрĕ çинче вĕсене валлъи вырăн çук

ЧАССР Тĕпĕçтăвкомĕн IX-мĕш Çеççийĕ йышăннă резолъуци

Совета хирĕçле „сылтăмла-троцкисла блок“ процесĕ çинчен пĕлтернисене итленĕ хыççăн, Чăваш АССР Тĕпĕçтăвком членĕсем пĕтĕм чăваш халăхĕпе пĕрле сылтăмла троцкисла бандăн, фашисăмăн йунлă агенчĕсен, йутçĕршыв государствисен шпионĕсен, диверсантсен, етем сăнне çухатнăскерсен киревсĕр, усал, вараланчăк ĕçĕсене хытă тарăхса ылханаççĕ.

Бандитсенчен, тăван çĕршыва пăрахнă, шпионсенчен, диверсантсенчен тăракан „сылтăмла-троцкисла блок“ йутçĕршывсен фашисла разведкисен заданийĕ тăрăх, вĕсем хĕçпăшаллă вăйпа пулăшнипе пирĕн аслă совет халăхĕн ирĕклĕхне, никама пăхăнса тăманлăхне туртса илесшĕн пулнă.

Рабочисемпе хресченсен йунне йухтарнипе вĕсем ССР Сойузĕнчи халъхи социалисăмла обществă тата государствă стройне çĕмĕрсе тăкма, пирĕн йуратнă тăван çĕршыва татăкăн-татăкăн ваклама пирĕн Украинăна, Белоруççине, Вăтам Азири республикăсене, Грузине, Арменине, Азербайджана, Приморйене фашиссене сутма, буржуази стройне тума шутланă.

Çакна тума вĕсем шпионла, диверçилĕ ĕçсем тунă, фашисла государствăсемпе килĕшÿ тунă, колхозсенче, кооперацинче, совхозсенче, финанс ĕçĕнче, социалисăмла хуçалăхăн, производствăн ытти мĕнпур пайĕсенче сăтăр тунă.

Çак çĕлен-калтасен преступленийĕ тискер: Бухарин, Рыков, тата ыттисем ес-ерсемпе, меншевиксемпе, йутçĕршыв разведкисен шпионĕ халăх тăшманĕ Троцкипе пĕрле совет влаçĕн малтанхи çулĕсенчех В. И. Ленина, И. В. Сталина, Йа. М. Свердлова хирĕç заговор организациленĕ, Совет влаçне çĕмĕрсе тăкса буржуалă правителствă тăвасси çинчен килĕшсе таталнă.

Вĕсем партин шанчăклă ывăлне, пĕтĕм Совет халăхĕ чĕререн йуратакан С. М. Кирова, хурçă пек çирĕп чекиса В. Р. Менжинскине, партипе государствăн йуратнă руководителĕсенчен пĕрне—В. В. Куйбышева, генилĕ писатĕле А. М. Горькине тискеррĕн вĕлернĕ, халăхсен çулпуçне Сталин йулташа тата унăн соратникĕсене вĕлерме хатĕрленнĕ.

Чăваш АССР Тĕпĕçтăвком членĕсем мĕлйунлă чăваш халăх йачĕпе ССР Сойуз Верховнăй Сучĕн Çар Коллегинчен „сылтăмла-троцкисла блока“ хутшăннисене, фашисла çĕлен калтасене пĕрсе пăрахмала приговор йышăнма ыйтаççĕ.

Чăваш АССР Тĕпĕçтăвком членĕсем Сталинла Нарком Н. И. Йежов йулташ йертсе пыракан мухтавлă совет разведкисене хĕрÿлĕн саламлаççĕ. Советăн мухтавлă разведкисем фашисăмăн троцкисла-бухаринла, буржуалă-националисла бандисене пĕтерсе пыраççĕ.

Чăваш АССР Тĕпĕçтăвком Çеççинче пулнисем пĕтĕм чăваш халăхне тата ытларах револъуцилĕ сыхăлăхлă пулма, сăтăрçăсен йулашкисене болъшевикла пĕтерме, хамăр çĕршывăн оборонă хăватне тата ытларах çирĕплетме, Ленин тата Сталин йалавĕ айне тăрса социалисăмăн çĕнĕ çĕнтерĕвĕсем патне хăвăрттăн малала кайма чĕнеççĕ.

Сывă пултăр коммуниссен (болъшевиксен) партийĕ!

Сывă пултăр пирĕн йуратнă çулпуç, учител, атте тата тус Сталин йулташ!

Халăх приговорĕ

ЕЛĔК. Районри ĕççыннисем тăшмансен ирсĕр ĕçĕсем çинчен чунран çÿçенсе тарăхса пĕлчĕç. Тăшмансен „сылтăмла-троцкисла блок“ ушкăнне тăрă шыв çине кăларнине, вĕсен ĕçĕсене пăхса тухма Верховнăй Судăн Çар Коллегине панине пĕлнĕ хыççăн пур çĕрте те митингсем пулса иртеççĕ.

Машинă - тракторлă станцинче ĕçлекенсен митингĕнче бригадир Громов:

— Епĕ пирĕн ирĕклĕ те телейлĕ совет çĕршывне сутма тапăннăскерсене пĕрне хăвармиччен персе вĕлерме ыйтатăп.

Епĕ хам бригадăпа стахановла ĕçлеме пулатăп, терĕ. Митинг пĕр саслăн ирсĕр тăшмансене—Бухарина, Рыкова, Йагодана тата ыттисене персе вĕлерме ыйтса, резолъуци йышăнчĕ.

Колхозсенчи митингсем пур çĕрте те тăшмансене персе вĕлерме ыйтаççĕ.

В. Йефремов.

Çĕлен-калтасене вилĕм

Чăвашсен государствă театр училишчинчи студентсемпе педагогсем БУХАРИН, РЫКОВ, ЙАГОДА т. ыт. тăшмансен ирсĕр ĕçĕсем тăрăх „Айăпласа çырнине“ вуласа пĕлсен митинг туса иртерчĕç.

Митингра завуч Совин Сокс йулташ „сылтăмла-троцкисла блок“ йатлă заговорла ушкăнăн шпионла, сăтăрла, диверсиле тата террорла ĕçĕсем çинчен каласа пачĕ.

Митингра пулнисем пурте пĕр сасăпах йунлă çĕлен-калтасене пурне те персе пăрахмала, терĕç.

Ответлă редактор ĕçĕсене тăваканĕ И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

Шупашкар хули Совечĕн президиумĕ йышăннă постановлени тăрăх коммуналă предприйати „ВОДОСВЕТ“ уйрăм ĕçлекен икĕ предприйатийе уйăралат:

1. „ШУПАШКАР ХУЛИ ЕЛЕКТРОСТАНЦИ“ Расчот счочĕ № 17 Коммуналă банкра. Телефон № 384.

2. „ШЫВПА КАНАЛИЗАЦИ ТЫТĂМĔ“ Расчот счочĕ № 29/41 Коммуналă банкра. Телефон № 7-46.

3—1

Шупашкар хули электростанцине

АСЛĂ БУХГАЛТЕР

ТАТА

БУХГАЛТЕР КИРЛĔ

Ĕçукçи килĕшÿ тăрăх.

Адрес: Шупашкар, Чувашокайа урам, „Водосвет поçолки“ Електростанци кантурĕ.

3—1

Шупашкарти вылъăхсем хатĕрлекен — кантурне —

Совхозра йалан ĕçлеме

БУХГАЛТЕР кирлĕ.

Хватер пур.

Ĕçукçи килĕшÿ тăрăх.

Адрес: Шупашкар, Йармăркă урамĕ, Вылъăх хатĕрлев пункчĕ.

ÇЕМЙЕЛĔ ÇЫНСЕНЕ ТАТА ПЕЧЕН ПУРĂНМА

ПЎЛĔМ КИРЛĔ

Хак килĕшÿ тăрăх.

Адрес: 8-мĕш №-лĕ почтă йешчĕкĕ, Гидрологи партине.

Опытлă тракторист васкавлă кирлĕ

„СТЗ“ тракторпа ĕçлемеле пулат

Ĕçукçи килĕшÿ тăрăх.

Çак адреспе пымала:

Вăрнар районĕ, ТУВАЛЪКИНĂ КОЛХОЗА.

2—1

Чăвашавтогужтрестне

„ЗИС“ тата „ГАЗ“ маркăлă çĕнĕ грузовиксемпе çÿреме

ШОФЕРСЕМ КИРЛЕ

Савнашкалах автомашинăсене йусама стажлă механиксем, слесарсем кирлĕ.

Ĕç тумтирĕ параççĕ, пĕччен çынсене валъъи обшчежити пур.

2—1

„Чăваш коммунĕ“ сырăнса илмели хакĕсем; 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 5 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайала памаççĕ.

Уполномоченнăй Чувашглавлита № 118. Гор. Чебоксары, Типографи № 1 Чуваш лавлита. Заказ № 197. Тираж 15.500 52—94 см. 1—1 п. л.